ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Январь 16
ЭРНЕКУН
№ 10 (8919)
35-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

И. В. Сталин юлташ Китайпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх Обществин председателĕн заместительне Сун Цзин-лине тата Китайри Наука академийĕн президентне Го Мо-жона йышăннă (1 стр.).
Выранти Советсен суйлавĕ умĕн (1 стр.).
Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНАÇĔ: Устав—парти пурнăçĕн никĕсĕ.
Г. Шувалов.— Заводри парторганизаци XIX-мĕш съезд хыççăн (2 стр.).
П. Осипов.—Советсен колхозсене вăйлатма тăрăшмалла (3 стр.).
В. Атлашева.— Суту-илÿ ĕçĕнчи культурлăха ÿстерер (3 стр.).
ТЕАТР: Ф. Романова.— «Çемье чысĕ» (3 стр.).
И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă произведенине тата КПСС XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене вĕренеççĕ (4 стр.).
ССР Союзĕнчи тата халăх демократи çĕршывĕсенчи ялхуçалăх наукисен аслă учрежденийĕсен представителĕсен конференцийĕ уçăлнă (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Суд Жак Дюкло жалобине тивĕçтернĕ (4 стр.).

Профессор-врачсен маскипе витĕннĕ ирсĕр шпионсемпе çынвĕлеренсем

«Правда» хаçат январĕн 13-мĕшĕнче тухнă номерте çапла çырать:

Паян сăтăрçă-врачсен ушкăнне арестлени çинчен ТАСС хроники пичетленет. Врачсен террористла çак ушкăнне государство хăрушсăрлăхĕн органĕсем «нумай пулмасть тупса тытнă, çак ушкăн сыватас ĕçе сăтăрла майсемпе туса пырса, Совет Союзĕн активлă деятелĕсен пурнăçне кĕскетме тĕллев тытнă пулнă.

Следстви çакна палăртнă: террористла ушкăн участникĕсем, хăйсем врачсем пулнипе тата чирлĕ çынсем вĕсене шанса тănипе усă курса, чирлĕ çынсен сывлăхне юриех сăтăрла хавшатса пынă, мĕнле чирпе чирленине пĕлсе тăнă çĕртенех тĕрĕс мар кăтартса панă, унтан вара чирлĕ çынсене тĕрĕс мар эмеллесе вĕлернĕ. Врачăн пархатарлă та хисеплĕ ячĕпе—наука çынни ячĕпе витĕнсе, çак ирсĕрсемпе çынвĕлеренсем наукăн таса ялавне таптаса тăкнă. Тискер преступленисен çулĕ çине тăрса, вĕсем ученăйсен ячене вараланă.

Çак тискер банда А. А. Жданов тата А. С. Щербаков юлташсене вĕлернĕ. Преступниксем çакна йышăннă: вĕсем, А. А. Жданов юлташ чирленипе усă курса, унăн чирне юриех тĕрĕс мар кăтартнă, унăн миокард инфаркчĕ пулнине пытарнă, çавăн пек йывăр чирленĕ чухне сиенлĕ режим сĕннĕ, çапла вара Жданов юлташа вĕлернĕ. Врачсем-çынвĕлеренсем, Щербаков юлташа сыватнă чухне хăватлă эмелсем парса тата сиенлĕ режим туса, вилĕм патне илсе çитернĕ, çапла унăн пурнăçне кĕскетнĕ.

Преступниксем чи малтан Совет Çарĕн ертсе пыракан кадрĕсен сывлăхне хавшатма, вĕсене стройран кăларса çĕршыв оборонине вăйсăрлатма тăрăшнă. Анчах арестлени вĕсен ирсĕр планĕсене аркатса ячĕ, преступниксем хăйсен планне пурнăçлаймарĕç.

Камшăн ĕçленĕ-ха çак ирсĕрсем? Тăван çĕршыва сутакансен террористла тата тăшманла ĕçĕсене кам ертсе пынă? Совет государствин активлă деятелĕсене вĕлерсе, вĕсем мĕнле тĕллеве пурнăçласшăн пулнă?

Çакна палăртнă: врачсен террористла ушкăнĕн участникĕсем пурте ют çĕршыв разведкисене тара кĕрĕшнĕ агентсем пулнă, вĕсем çав преступниксене сутăнса, вĕсенчен пулăшу илсе тăнă.

Террористла ушкăн участникĕсем нумайăшĕ—Вовси, Б. Коган, Фельдман, Гринштейн, Этингер т. ыт. те—Америка разведкине сутăннă ирсĕрсем пулнă. Вĕсене Америка разведкин филиалĕ—еврейсен пĕтĕм тĕнчери буржуаллă-националистла «Джойнт» текен организацийĕ тара тытнă. Шпионсен çак организацийĕ хăйне ырă тĕллевсемпе организациленĕ тесе ĕнентерме хăтланать, анчах унăн таса мар сăн-сăпатне пĕтĕмпех тăрă шыв çине кăларнă.

«Джойнт» организацийĕнчи профессиллĕ шпионсемпе террористсем, еврейсен буржуалла националисчĕсем çине таянса, Америка разведки панă задание пурнăçласа тата вăл ертсе пынипе, Совет Союзĕнче те тискер ĕçсем туса тытăннă. Арестленĕ Вовси следствие: эпĕ США-ран «ССР Союзĕнчи ертсе пыракан кадрсене вĕлерсе пĕтерме директива илтĕм», тесе пĕлтернĕ. Ăна çак директивăна шпионсемпе террористсен «Джойнт» ятлă организацийĕ ячĕпе врач Шимелиович тата еврейсен паллă националисчĕ Михоэлс панă.

Врач-ирсĕрсен шайкине тăрă шыв çине кăларни еврейсен пĕтĕм тĕнчери сионистла организацине пырса çапать. «Джойнт» ячĕпе мĕнле «пархатарлă çынсемпе» «мир тусĕсем» витĕнсе пурăннине халĕ ĕнтĕ пурте курма пултараççĕ.

Халĕ ĕнтĕ çакна та палăртнă: террористла ушкăнăн ытти участникĕсем (Виноградов, М. Коган, Егоров) тахçантанпах Англи разведкин агенчĕсем пулнă, унăн çав тери преступникла, таса мар заданийĕсене пурнăçласа, çав разведкăшăн тахçантанпах ĕçлесе пурăннă.

США-н ертсе пыракан ушкăнĕсемпе вĕсен «кĕçĕн партнерĕсем» ытти халăхсене пусмăрлама мирлĕ майпа çĕнсе илме май çуккине пĕлеççĕ. Çĕнĕ тĕнче вăрçине васкасах хатĕрленсе, вĕсем ССР Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсен тылне хăйсен лазутчикĕсене яраççĕ, гитлеровецсен путланса ларнă ĕçне тума — ССР Союзĕнче сăтăрла «пиллĕкмĕш колонна» туса хума тăрмашаççĕ. Социализм лагерĕнчи çĕршывсенче террористла тата шпионла ĕçсем туса пыма Америка правительстви уççăнах тискеррĕн çĕр миллион доллар уйăрса пани çинчен аса илтерни те çителĕклĕ; унсăр пуçне, çав тĕллевсемпех Америкăпа Англи çĕршер миллион доллар расходлаççĕ.

Совет çыннисен хăйсен сыхăлăхне пур майсемпе те ÿстерсе пыма кирли çинчен, вăрçă чĕртекенсейĕпе вĕсен агенчĕсен ĕçĕсене тимлĕн асăрхаса тăма кирли çинчен, пирĕн государствăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсемпе разведка органĕсене ывăнма пĕлмесĕр тĕреклетсе пыма кирли çинчен пĕр минутлăха та манмалла мар.

Сталин юлташ пĕр хут кăна мар çапла кăтартса панă: пирĕн çитĕнÿсен лĕксĕм енĕсем те пур, вĕсем пирĕн нумай работникĕсем хушшинче лăпланса пурăнас шухăш-кăмăла пуçарса яма пултараççĕ. Çавнашкал шухăш-кăмăлсене халĕ те пĕтереймен-ха. Сисĕмсĕр çынсем пирĕн сахал мар-ха. Шăпах сисĕмлĕхпе тимлĕхе çухатнă çынсем ĕнтĕ тăшмансене сăтăрла ĕçсем тума май паракан никĕс пулаççĕ.

ССР Союзĕнче социализмлă хутшăнусем пуç пулса тăраççĕ. Совет халăхĕ Отечественнăй Аслă вăрçăра историре нихçан пулман чаплă çĕнтерÿ турĕ. Вăрçă кÿнĕ суранcене кĕске срокра юсаса çитернĕ. Хуçалăхпа культура строительствин пур участокĕсенче те эпир çитĕнÿсем турăмăр. Çак фактсенчен хăшпĕр çынсем çакăн пек вывод тăваççĕ: сăтăрла ĕçсем, диверсисемпе шпионла ĕçсем тăвас хăрушлăх пĕтнĕ ĕнтĕ, капитализмлă тĕнчен ертсе пыракан ушкăнĕсем ССР Союзне хирĕç сăтăрла ĕçсем тума хăтланассине пăрахăçа кăлараççĕ, теççĕ.

Анчах çакăн пек сылтăм социалистсем кăна, «класлă кĕрешÿ сÿнсе пыни» çинчен калакан теори — марксизма хирĕçле теори майлă тăракансем кăна шухăшлама пултараççĕ. Вĕсем çакна ăнланса илеймеççĕ тата ăнланма та пултараймаççĕ: пирĕн çитĕнÿсем кĕрешÿ сÿнсе ларасси патне мар илсе пымаççĕ, кĕрешÿ çивĕчленесси патне илсе пыраççĕ, эпир малалла мĕн чухлĕ ăнăçлăрах пыратпăр, халăх тăшманĕсем те, пурпĕрех пĕтсе ларассине курса, çивĕчреххĕн кĕрешме пуçлаççĕ.

Çакăн пек вĕрентет вилĕмсĕр Ленин, çакăн пек вĕрентет Сталин юлташ.

Ленин çапла кăтартса панă: «Революци вăйĕ, тапăну вăйĕ, хăватлăх, çине тăни тата вăл çĕнтерни çав вăхăтрах буржуази енчен хирĕç тăрассине вăйлатаççĕ, çак закон пирĕн революци вăхăтĕнче нихăш революцирен те ытларах палăрчĕ».

Эпир малалла пынă май класлă кĕрешÿ «сÿнмелли» çинчен калакан оппортунистла теорие тăрă шыв çине кăларса, Сталин юлташ çапла асăрхаттарнă:

«Ку вăл — çĕрĕк теори кăна мар, тата хăрушă теори пулса тăрать, мĕншĕн тесен вăл пирĕн çынсене çывăрттарса ярать, вĕсене капкăна лектерет, класс тăшманĕ Совет влаçне хирĕç кĕрешессине çăмăллатать».

ССР Союзĕнче эксплуататорла классене тахçанах аркатса тăкнă, анчах буржуаллă идеологи юлашкисем — вак харпăрлăхлă психологипе мораль юлашкисем, буржуаллă шухăшсемпе буржуаллă мораль майлă тăракан **чĕрĕ çынсем** — пирĕн халăхăн вăрттăн тăшманĕсем сыхланса юлнă-ха. Шăпах çак çынсем ĕнтĕ, империалистсем пулăшнипе, малашне те сăтăрла ĕçсем тума пултараççĕ.

Çакă вăл совет çыннисене революцилле сыхăлăха вăйлатма, тăшман мĕн хăтланнине тимлĕ асăрхаса тăма хушать. «Наука çыннисем» хушшинчи ирсĕрсем чылай вăхăт хушши сăтăрла ĕçсем тума пултарни вăл советăн хăшпĕр органĕсем тата вĕсен руководителĕсем сыхăлăхпа тимлĕхе çухатни çинчен калать.

Государство хăрушсăрлăхĕн органĕсем врачсем хушшинчи сăтăрла, террористла организацине вăхăтра тупса палăртайман. Çак органсен уйрăмах сыхăлăхлă пулмалла пулнă ĕнтĕ, мĕншĕн тесен врач ячĕпе витĕннĕ çынвĕлеренсем, Тăван çĕршыва сутнă ирсĕрсем, Левин, Плетнев йышши «врачсем» сăтăрла ĕçсем туни паллă ĕнтĕ. Вĕсем вырăссен аслă писательне А. М. Горькине, Совет государствин паллă деятелĕсене В. В. Куйбышевпа В. Р. Менжинскине вĕлернĕ.

СССР Сывлăх министерствин руководителĕсем те тивĕçлĕ шайра тăман. Вĕсем Совет Союзĕн тăшманĕсене сутăннă ирсĕрсен сăтăрла тата террористла организацине асăрхаса палăртайман.

Сăтăрçă врачсен шайкине тăрă шыв çине кăларни Америкăпа Англин вăрçă чĕртекенсене вăйлă пырса çапни пулать. Вĕсен агентурине тытнă. США-па Англири чура хуçисемпе çынçиенсен чăн-чăн сăн-сăпачĕ пĕтĕм тĕнче умне тухса тăчĕ.

Совет халăхĕ çынвĕлеренсен преступникла бандине тата вĕсен ют çĕршывсенчи хуçисене çав тери тарăхса питлет. Вăл намăссăр сутăнчăксене, долларпа стерлингшăн сутăннăскерсене, ирсĕрсем вырăнне хурса пĕтерсе тăкĕ. Çак сутăнчăксене хавхалантаракансене илес пулсан, сулмаклă тавăру вĕсем патне те çитессе шансах тăма пулать.

Çаксем вĕсем, паллах, тĕрĕс. Анчах çакă та тĕрĕс: çав тăшмансемсĕр пуçне пирĕн тата тепĕр тăшман пур, вăл—пирĕн çынсен сыхăлăх çукки пулать. Иккĕленмесĕх кирлĕ мар, пирĕн хушăра сыхăлăх пулмасан, — сăтăрçăсем те пулĕç. Çапла ĕнтĕ, сăтăрçăсене пĕтерес тесен, хамăр хушăри тимсĕрлĕхе тата сисĕмсĕрлĕхе пĕтерес пулать.

Выранти Советсен суйлавĕ умĕн

Ĕçе активлă хутшăнаççĕ

КАНАШ. Учительски институтри партбюро суйлавçăсем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе туса пыма 79 студент уйăрчĕ. Студент-агитаторсем суйлавçăсем патне час-часах çÿреççĕ, вĕсене партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе паллаштараççĕ, суйлав законĕ çинчен ăнлантарса параççĕ. Будылина, Филиппова, Немцева, Майорова тата Федоров юлташсем суйлавçăсем хушшинче калаçусем чылай иртерчĕç.

Суйлавçăсене институтри партбюро тăватă хутчен института пухрĕ. Вĕсене валли Цимбалист юлташ тĕнчери лару-тăру çинчен, аслă преподаватель А. Ревзина юлташ ачасене çемьере вĕрентсе ÿстерессi çинчен, преподаватель Виткович юлташ коммунизмăн аслă стройкисем çинчен докладсем туса пачĕç. Преподаватель Александрова юлташ «СССР—реактивлă двигатель шухăшласа кăларнă çĕршыв» темăпа лекци вуларĕ.

Кашни доклад е лекци хыççăн концертсем пулчĕç е кино кăтартрĕç.

А. ЯРАНОВ.

Агитатор суйлавçăсен килĕнче

Кас пулчĕ. Ялта электричество çутăлчĕ. Агитатор Спиридонова юлташ çĕнĕ хаçат-журналсем йăтса суйлавçăсен килне кайрĕ.

Спиридонова учительница 65 çула çитнĕ. Вăл нумайранпа Вăрманкас шкулĕнче ĕçлет. Революци пулнăранпах вăл ялти активлă агитатор. Халĕ вăтă агитатора 11 кил çирĕплетсе панă. Суйлавçăсем патĕнче вăл ир те, кас та пулать, суйлав Положенине, партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене ăнлантарса парать, тĕнчери лару-тăру, колхоз пурнăçĕ çинчен калаçу иртерет, илемлĕ литература та вуласа парать. Спиридонова юлташ суйлав кампанийĕ пуçланнăранпа стена хаçачĕ, виçĕ хут боевой листок кăларчĕ. Çамрăксемпе час-часах тĕл пулать, вĕсене çак ялăн историйĕ çинчен каласа парать.

Вăрманкас — пысăк ял, унта халĕ 400 киле яхăн. Унăн вăрăм та тÿрĕ, сарлака та илемлĕ урамĕсемпе утса пынă чухне чĕнтĕрленĕ кантăклă, çине тимĕр е чус витнĕ çĕнĕ пÿртсем куратăн. Сăрланă хапхасем, колхоз фермисем, клуб, магазин çинче — пур çĕрте те суйлав плакачĕсем, илемлĕ ÿкерчĕксем.

1900 çул пуçламăшĕнче ялта вуламаçырма пĕлекен çын пачах та пулман. Ун чухне ялта 150 киле яхăн пулнă, нумайăшĕ хура пÿртсенче пурăннă, ялĕпе те 5 пĕчĕк çĕр мунча кăна пулнă. Трахома чирне пула килĕренех 2—3 çын суккăрланса ларнă. Çиме çитмен. Ялти пуянсем чухăнсене кун паман.

Октябрь революцийĕ сĕм вăрманта ларакан çак яла çутă кун илсе килчĕ. Çынсем уççăн сывласа ячĕç, тинех пуянсен çулне пÿлсе лартрĕç.

1928 çулта, хĕлле, ялта колхоз организацилерĕç, ăна «Çутталла» тесе ят пачĕç. 1950 çулта виçĕ пĕчĕк колхоз пĕрлешрĕç, пысăк колхоз пулса тăчĕ.

Ялта халĕ çичĕ çул вĕренмелли шкул пур. Унта 200 çамрăк ытла вĕренет, вĕсене 15 учитель вĕрентет. Медицина пункчĕ, магазин, клуб ĕçлеççĕ. Аслă шкулсемпе техникумсенче 17 çын вĕренет. Ялăн хăйĕн интеллигенцийĕ ÿссе çитĕнчĕ. Ĕлĕкхи вăхăтра ку ял çыннисем умывальник, чечек, куçкĕски, утюг, самовар мĕн иккенне пĕлмен пулсан, халĕ кашни килĕре тенĕ пекех вĕсем пур. Ялта хутла пĕлмен çын çук, кашни киле хаçат-журнал килсе тăрать. Нумай колхозниксем радио кĕртнĕ.

Чăваш АССР тава тивĕçлĕ учительници агитатор Спиридонова юлташ калаçусем иртернĕ чухне ял пурнăçĕнчен илнĕ тĕслĕхсемпе анлăн усă курать.

А. АФАНАСЬЕВ.

Çĕмĕрле районĕ, Калинин ячĕпе тăракан колхоз.

Хатĕрленÿ вăйланса пырать

МУРКАШ. Ĕçсынни депутачĕсен выранти Совечĕсене суйлама хатĕрленес ĕç Кашмаш ял Советĕнче анлăн сарăлса пырать.

Ял Советне кĕрекен «Свобода» колхозри агитколлектив 24 агитатора пĕрлештерсе тăрать. Агитколлектив руководителĕ Г. Романов юлташ выранти Советсен суйлав кампанийĕ пуçлансанах кашни вунă кил çумне пĕрер агитатор çирĕплетрĕ.

Агитаторсем çав килсенче выранти Советсен суйлавĕ çинчен, партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем çинчен тата И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă классикăллă произведенийĕ çинчен калаçусемпе докладсем иртереççĕ. М. Мефодьева, К. Овчинникова, Н. Петров агитаторсем хăйсене çирĕплетсе панă килсенче 4—5-шер хут калаçусем иртернĕ.

Ялти агитпунктра пирĕн Тăван çĕршыври коммунизмăн аслă стройкисемпе паллаштаракан тата «Вăйлă тырпулшăн, тухăçлă выльăх-чĕрлĕхшĕн» ятлă витринăсем туса çакнă. Суйлавçăсем докладсемпе лекцисем итлеме йышлă пухăнаççĕ, справка сĕтелĕ патне тĕрлĕ ыйтусемпе пыраççĕ.

Выранти Советсене суйламалли кун çинчен пĕлтерекен тата суйлав умĕнхи социализмла ăмăртăва анлăн сарма чĕнекен плакатсемпе лозунгсем ял хушшине чылай çĕре çыпăçтарнă.

Н. КИРИЛЛОВ.

Докладсемпе калаçусем иртереççĕ

Шупашкарти 19-мĕш суйлав участокĕн агитпунктĕнче ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Январь уйăхĕн малтанхи çур уйăхĕнче кунта суйлавçăсем валли 4 хутчен калаçусемпе докладсем иртернĕ, икĕ хутчен концерт панă.

Январĕн 13-мĕшĕнче КПСС хула комитечĕн лекторĕ Кустарникова юлташ суйлавçăсене тĕнчери лару-тăру çинчен лекци вуласа пачĕ. Лекци хыççăн пирагăр комбинатĕнчи художествăллă пултарулăх кружокĕн (руководителĕ Н. Бронникова юлташ) концерчĕ пулчĕ.

Январĕн 19-мĕшĕнче агитпунктра «29 çул Ленинсăр, Ленин çулĕпе, Сталин ертсе пынипе» темăпа суйлавçăсем валли доклад пулать.

Агитпунктра справка сĕтелĕ ĕçлет. Кунта яланах дежурнăй пулать. Вулама çĕнĕ хаçат-журнал, суйлав çинчен калакан кĕнекесем çителĕклĕ, заемсен выляв таблицисем те пур.

Г. МАЛЬЦЕВ.

Суйлав комисси представителĕсен канашлăвĕ

Январĕн 14-мĕшĕнче Шупашкарта округсемпе участоксенчи суйлав комисси председателĕсен, секретарĕсен тата членĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура выранти Советсен суйлавне иртерес тĕлĕшпе участоксемпе округсенчи комиссисем умĕнче тăракан задачăсем çинчен Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председатель заместителĕ Д. Я. Митьков юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик суйлава хатĕрленнĕ май республикăри суйлавçăсен политикăллă активлăхĕпе ĕçри хастарлăхĕ ÿснине, предприятисемпе МТС-сенче, колхозсенче суйлав кунне ĕçри çитĕнÿсемпе кĕтсе илессишĕн социализмлă ăмăрту сарăлса пынине палăртрĕ.

Митьков юлташ иртнĕ суйлава хатĕрленнĕ чухнехи паха примерсене, çавăн пекех тата хăшпĕр йăнăшсемпе çитменлĕхсене илсе кăтартрĕ, комиссисен ĕçне мĕнле йĕркелемелли çинчен тĕплĕн каласа пачĕ.

Канашлура Шупашкар хула Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен хула суйлав комисси председателĕ И. Д. Светлов юлташ комиссисен çак кунсенче мĕнле ĕçсем тумалли çинчен каласа пачĕ.

И. В. Сталин юлташ Китайпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх Обществин Председателĕн заместительне Сун Цзин-лине тата Китайри Наука академийĕн президентне Го-Мо-жона йышăннă

Январĕн 13-мĕшĕнче И. В. Сталин юлташ Китайпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх Обществин Председателĕн заместителĕпе Сун Цзин-линпе тата Мире хÿтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Пĕтĕм Китайри Халăх Комитечĕн Президиумĕн Председателĕпе, Китайри Наука академийĕн президенчĕпе Го Мо-жопа калаçнă. (ТАСС).

Ленин кунĕсем умĕн

МУСКАВ. Пирĕн Тăван çĕршывăн столицинчи ĕçсыннисем, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, Владимир Ильич Ленин ятне яланах чĕрере тытса асăнса пурăнаççĕ. Ленин кунĕсем умĕн пиншер агитаторсем заводсемпе фабрикăсен цехĕсенче, учрежденисенче, шкулсемпе агитпунктсенче Владимир Ильичăн пурнăçĕпе революцилле ĕçĕ çинчен, В. И. Ленинпа И. В. Сталин хушшинчи аслă туслăх çинчен, ленинизм идейисен чаплă çĕнтерĕвĕ çинчен калаçусем иртереççĕ.

Политикăллă тата наукăллă пĕлÿсем саракан Пĕтĕм Союзри обществăн пысăк залĕнче çывăх кунсенчех «В. И. Ленинпа И. В. Сталин хушшинчи аслă туслăх», «В. И. Ленин сăнарĕ ССР Союзĕнчи халăхсен творчествинче» темăсем тăрăх лекцисем пулаççĕ.

Çак кунсенче В. И. Ленинăн Центральнăй музейне çынсем нумай пыраççĕ. Январьте икĕ эрне хушшинче музейри экспонатсене 35 пин çын ытла пырса курнă.

Республикăри колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансен канашлăвĕ

Январĕн 14-мĕшĕнче Шупашкарта выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекен малта пыракан работниксен канашлăвĕ пулчĕ. Канашлу ĕçне колхоз председателĕсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем те хутшăнчĕç. Çак канашлăва КПСС обкомĕпе Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ пухнă.

Канашлăва парти обкомĕн секретарĕ **Т. А. Ахазов** юлташ кĕске сăмах каласа уçрĕ.

Республикăри колхозсемпе совхозсем умĕнче обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе тăракан задачăсем çинчен парти обкомĕн секретарĕ **Н. А. Шманов** юлташ доклад турĕ.

Канашлура выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстерес тата унăн тухăçлăхне хăпартас енĕпе тунă ĕç опычĕпе паллаштарас шутпа çак юлташсем тухса каларĕç: **И. Л. Львов**—Канаш районĕнчи «Канаш» колхоз председателĕ, **А. В. Чермилов**—Çĕмĕрле районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозри ферма заведующийĕ, **М. С. Митин**—Улатăр районĕнчи «Победа» колхоз председателĕ, **А. Н. Козлов**—Пăрачкав районĕнчи участокри зоотехник, **М. Н. Маркина**—Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозри доярка, **Е. А. Андреева** — Красноармейски районĕнчи «Красное Сормово» колхозри дояркa, **Н. М. Крынецкий**—Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозри сурăх ферми заведующийĕ, **В. А. Андреева** — Советски районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозри çăру пăхакан, **А. И. Леднева**—Пăрачкав районĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан колхозри дояркa, **О. М. Митрофанова** — Çĕрпÿри селекци станцийĕнчи дояркa, **П. В. Заплаткина**—Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхозри дояркa, **Р. Н. Шурбина**—Комсомольски районĕнчи «Красная звезда» колхозри дояркa, **Г. К. Кузьминская**—Çĕрпÿри селекци станцийĕнчи научнăй сотрудник, **М. П. Яковлев** — Йĕпреç районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ, **Т. Я. Краснова**—Октябрьски районĕнчи «Звезда» колхозри сысна пăхакан тата ыттисем те—пурĕ 18 çын.

Канашлура пулнисем республикăри ялхуçалăхĕнчи мĕнпур работниксене, колхоз председателĕсене, ялхуçалăх специалисчĕсене тата МТС-сенчи механизаторсене обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине малалла вăйлатса пырассишĕн, обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстерессишĕн тата унăн тухăçлăхне хăпартассишĕн, государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсене срокчен тултарассишĕн массăллă социализмлă ăмăрту организацилеме чĕнсе канашлуне йышăнчĕç.

Совет Союзĕ тăрăх



Мускав. 1952 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнче Государствăн Третьяковски галлерейинче Пĕтĕм Союзри художество выставки уçăлнă.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: курма пынă çынсем галлерейăн пĕр залĕнче картинăсене пăхаççĕ.

К. ИВАНОВПА Э. ЕВЗЕРИХИН фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

МАРКС — ЭНГЕЛЬС — ЛЕНИН ИНСТИТУТĔНЧЕ НАУКĂЛЛĂ СЕССИ ВĔÇЛЕННĔ

КПСС Центральнăй Комитечĕ çумĕнчи Маркс — Энгельс — Ленин Институтĕнче И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă классикăллă произведенийĕ тăрăх иртернĕ наукăллă сесси январĕн 14-мĕшĕнче вĕçленнĕ. Ку сесси икĕ кун хушши пынă.

Малтанхи кунхи ларура экономикăллă наукăсен кандидачĕ Я. Б. Турчинс «Сталин юлташ тĕнчери пĕрлĕхлĕ рынок пайланни тата тĕнчери капитализмлă системăн кризисĕ тарăнланни çинчен» темăпа тата Маркс—Энгельс—Ленин Институчĕн старши научнăй сотрудникĕ, философи наукисен кандидачĕ А. А. Уйбо «Сталин юлташ «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă произведенийĕнче марксистла-ленинла философие аталантарни» темăпа тунă докладсене итленĕ.

Сессире И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă генилле произведенийĕ тăрăх тунă пилĕк доклада итленĕ.

(ТАСС).

ТАДЖИКИСТАНРИ УЙ-ХИР ĔÇĔСЕМ

СТАЛИНАБАД, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Таджикистанра çурхи уй-хир ĕçĕсем сарăлсах пыраççĕ. Республикăри колхозсем вунă пин гектар ытла тулă, урпа тата ытти культурăсем акнă.

Машина-трактор станцийĕсем çĕнĕ машинăсемпе пуянланнă. Республикăри МТС-сенче халĕ, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, тĕрлĕ йышши тракторсем икĕ хут, плугсем — виçĕ хут нумайрах.

Чехословаки Республикинчи артистсен концерчĕ

Январĕн 14-мĕшĕнче Мускаври П. И. Чайковский ячĕпе тăракан консерваторин пĕчĕк залĕнче Чехословаки Республикинчи артистсен гастролĕсем пуçланнă. Вăл артистсем Мускава СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен комитечĕ чĕннипе килнĕ.

Сметана ячĕпе тăракан хĕлĕх инструментлă квартет хăйĕн пултарулăхне кăтартнă. Квартетра—И. Новак, Л. Костецкы, Я. Рыбенскы, А. Когоут. Вĕсем Бетховен, Дворжак, Сметана хĕлĕх инструментлă квартет валли çырнă произведенисене каланă.

Концертра столицăри музыкальнăй общественноçăн представителĕсем, çавăн пекех Чехословаки Республикин Мускаври Посольствин ответлă сотрудникĕсем, Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посол Я. Вошаглик пулнă.

Концерт питĕ ăнăçлă иртнĕ. (ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

УСТАВ—ПАРТИ ПУРНĂÇĔН НИКĔСĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă Устав коммунистсене, партипе государство кадрĕсене марксизм-ленинизм идейисемпе майлă воспитани парас ĕçе вăйлатмалли, партин шалти демократине, критикăпа самокритикăна аталантармалли хĕçпăшал пулса тăрать. Устав партин организацилле ĕçĕсен шайне çĕнĕ, çӳлĕрех пусăма çĕклет.

КПСС Уставĕ—парти пурнăçĕн никĕсĕ. Ăна çирĕп пурнăçласа пырасси—кашни коммунистăн пирвайхи тивĕçĕ.

Пирĕн редакци парти членĕсенчен çырусем илет. Вĕсенче коммунистсем вырăнти организацисен ĕçĕнчи çитĕнӳсемпе çитменлĕхсене кăтартса параççĕ. Вĕсем тĕрĕс тăваççĕ. Коммунист çитменлĕхсемпе килĕшсе тăма пултараймасть. Çитменлĕхсене хăюллăн палăртмалла, вĕсене хăвăртрах пĕтермелле.

Паян эпир редакцие килнĕ хăшпĕр çырусене пичĕтлетпĕр.

Коммунистсен пысăк тивĕçĕ

Коммунистсен партийĕн çĕнĕ Уставĕ кашни коммуниста хăйĕн ăнланулăхне ӳстерес, марксизм-ленинизм никĕсĕсене вĕренес тĕлĕшпе ĕçлеме хушать. Урăхла пулма те пултараймасть, хăйĕн пĕлĕвне ӳстерме пăрахнă коммунист пурнăçран юлма тытăнать, хăйĕн çитменлĕхĕсене курми пулать, парти пурнăçĕнчен пăрăнма, парти решенийĕсем çине çиелтен пăхма тытăнать.

Ку тĕрĕс пулнине пурнăçри фактсем лайăх кăтартса параççĕ. Пирĕн заводри асла диффузорщик Н. Шараськин юлташ темиçе çул каялла активлă рабочи шутланатчĕ. Анчах халĕ Шараськин юлташа паллама та çук. Вĕренме пăрахнă пирки, вăл пачах ӳсмен, мĕн пуррипе кăна лăплانса ларнă. Ĕçре те унăн малтанхи хĕм юлмарĕ. Вара ăна аслă диффузорщикрен кăларчĕç. Халĕ вăл рядовой рабочи пулса тăчĕ. Çак сăлтавсене пула вăл кандидатран парти членне кĕреймест. 1948 çултанпах кандидатра тăрать.

Юлашки вăхăтра пирĕн «Большевик» заводри парторганизацире коммунистсене хытă пăшăрхантаракан ĕçсем пулса иртрĕç. КПСС райкомĕ Мясниковпа Новиков коммунистсене парти ретĕнчен кăларчĕ. Иккĕшĕ те райком членĕ мар. Апла пулин те, пуçламăш парторганизацире сӳтсе явмасăрах, райком вĕсене парти ретĕнчен кăларчĕ. Вĕсем çинчен пуçламăш парторганизаци пухăвĕнче сӳтсе явнă пулсан, пирĕн коммунистсем Мясниковпа Новиков мĕнле сăлтавсене пула çавăн пек пулса кайнине курнă пулĕччĕç. Çакă вăл коммунистсемшĕн усăллă пулатчĕ. КПСС райкомĕ вара çакна шута илмерĕ.

Пирĕн организацире коммунистсене воспитани парас ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Парти вĕренĕвĕ те йĕркеллĕ пуçланмарĕ. Эпĕ вĕренекен кружокра, руководитель пулман пирки, ноябрĕн 25-мĕшĕччен пĕр занятя те пулмарĕ. КПСС райкомĕ кружока ертсе пыма пропагандист тупса памарĕ.

Халĕ занятисем мĕнле иртеççĕ-ха? Занятисем иртеççĕ, анчах вĕренекенсенчен çурри те пухăнмасть.

Çакăн çинчен парторганизаци секретарĕ М. Филин юлташ пĕлет. Кружок старости пулнă май, эпĕ кашни занятии хыççăнах партбюро секретарьне кам занятие пыманни çинчен пĕлтеретĕп. Завком председателĕ В. Скитев, хатĕр продукци складĕн начальникĕ Г. Игнатьев, электроцех начальникĕ Л. Володин, инженер Т. Борисовская юлташсем вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпа пĕр-ик занятире кăна пулчĕç. Апла пулин те парторганизаци секретарĕ вĕсене чĕнсе калаçман.

Парторганизаци секретарĕ М. Филин юлташ коммунистсене парти вĕренĕвне явăçтарма тăрăшманнине тепĕр тĕслĕх лайăх кăтартса парать. Ноябрь уйăхĕнче пирĕн парторганизацире парти вĕренĕвĕ мĕнле пыни çинчен КПСС райкомĕн бюровĕ сӳтсе явнă. Унтанпа уйăх иртрĕ. Парти вĕренĕвĕнче пирĕн пурпĕрех улшăну çук. Эпир, рядовой коммунистсем, ку таранччен те пирĕн парторганизаци пирки райком бюровĕ мĕнле решени йышăннине пĕлместпĕр.

Ман шухăшпа, Устав хушнисене пурнăçлассишĕн парти райкомĕн те, заводри партбюрон та çине тăрса кĕрешмелле.

В. ГОРШКОВ.

Çĕмĕрле хулинчи «Большевик» завод.

Критикăран сивĕнмелле мар

Эпĕ темиçе çул ĕнтĕ Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕнчи пĕрремĕш цехри парторганизаци секретарĕ пулса ĕçлетĕп. Нумай çулхи опыт тăрăх, эпĕ çакна ăнланса илтĕм: коммунист, Устав хушнă пек, активлă борец пултăр тесен, парторганизаци секретарĕн е партгруппоргăн кашни коммунистпа уйрăммăн ĕçлемелле.

Парти ретне тин кăна кĕнĕ юлташсемпе ĕçлесси çине тимлĕ пăхмалла. Кашнине, унăн пултарулăхне тата пĕлĕвне кура, партпоручени пани усăллăрах.

Эпир М. Корженков комсомолеца парти членĕн кандидатне илтĕмĕр. Комсомол ĕçне вăл лайăх пĕлет. Çавна кура ăна эпир комсомолецсем хушшинче ĕçлеме поручени патăмăр. М. Корженков юлташ çак поручение пысăк хастарлăхпа пурнăçлама тытăнчĕ. Халĕ пирĕн цехри комсомол организацийĕн ĕçĕ лайăхланчĕ, вăл организацилĕх тĕлĕшĕнчен тĕрекленчĕ, унăн авторитечĕ ӳсрĕ.

Массăсем хушшинче партилле-политикăллă ĕç ăнăçлă пуласси партгруппорг е парторганизаци секретарĕ пуçарулла пулнинчен тата вăл парти ĕçне парти решенийĕсенчен тухса тăракан задачăсемпе çыхăнтарса туса пыма пĕлнинчен килет. Цехри партгруппорг е парторганизаци секретарĕ парти ĕçне производствăран уйăрлмасăр туса пырать. Паллах, унăн пĕлĕвĕ те пысăкках мар. Çавăнпа та КПСС райкомĕ ирттерекен семинарсем, лекцисемпе докладсем вĕсемшĕн уйрăмах пысăк вырăн йышăнаççĕ. Çакна вара пирĕн КПСС Çĕмĕрле райкомĕ шута илмест. Вăл семинарсене ячĕшĕн кăна ирттерет.

Ноябрь уйăхĕнче пуçламăш парторганизаци секретарĕсемпе партгруппоргсен семинарне ирттерчĕç. Семинара 2 сехет тĕлне çитмелле пулнă. Пирĕн цехран кăна çав семинара 4 çын каймаллаччĕ. Çапла комбинатран 40—50 çын каймалла пулнă. Çавăн чухлĕ çын ĕç вăхăтĕнче ĕçтан производствăна пăрахса кайтăр-ха? Предприятисенчи секретарьсемпе партгруппоргсем производствăпа çыхăннине КПСС райкомĕнче пĕлмеççĕ-ши?

Тепĕр чухне урăхла та пулса тухать. Декабрĕн 8-мĕшĕнче КПСС райкомĕн библиотекинче агитаторсен канашлăвне ирттерчĕç. Канашлу пуласси çинчен çав кун ирхине кăна пĕлтернĕ. Çав кун эпир цехсенче пухусем ирттерме палăртнăччĕ. Пирĕн агитаторсем ку канашлура та пулаймарĕç.

Çакăн çинчен эпĕ КПСС райкомĕн нумаях пулмасть пулса иртнĕ III-мĕш пленумĕнче тухса каларăм. Çакăншăн малтан райком пропагандисчĕ Е. Шурыгина юлташ, ун хыççăн КПСС райкомĕн секретарĕ А. Федорова юлташ мана айăпласа хучĕç, хăйсен ĕçĕнчи формализма йышăнмарĕç.

Сăмах май каласан, пленумĕ те ячĕшĕн кăна иртрĕ. Критика пулмарĕ. Колхозсенчи парторганизаци секретарĕсенчен пĕри те сăмах тухса каламарĕ. Пренире 7 çын тухса каларĕç те: «Çитет!», терĕç. Тухса калакансем критиклеме тытăнарах тăраççĕ, мĕншĕн тесен райком секретарĕн Федорова юлташăн çакăн пек йăла пур: хăй ирттерекен канашлусенче кам критикăллă асăрхаттарусем тăвать, юлашки сăмахра Федорова юлташ çав çынна хушаматне асăнса хирĕçлетех. Çитменлĕхсем пулманран критиклемеççĕ, критиклеме сăлтавĕ пур, çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшапăр тени çук, унăн тем пулсан та «çылăхсăра тухмалла». Ку вара критикăна хĕсессинчен инçе тăмасть.

А. ПЕТРОВ.

Тĕрĕс те тӳрĕ пул

«Парти умĕнче тĕрĕс те тӳрĕ çын пулмалла, тĕрĕслĕхе пытарни тата пăсса кăтартни пулмалла мар. Коммунист тĕрĕс çын пулманни тата партипе улталани çав тери киревсĕр ĕç пулса тăрать, ун пек ĕç тăвакан çын парти ретĕнче пулма тивĕçлĕ мар», тенĕ партин çĕнĕ Уставĕнче.

Тĕрĕслĕхпе тӳрĕлĕх—коммунистăн лайăх енĕ. Парти членĕн кирек мĕнле ĕçре те, обществăллă пурнăçпа йăлара та ыттисемшĕн кăтартуллă пулмалла.

Тӳрех калас пулать, пирĕн хушăмăрта кĕсъере парти билетне чиксе çӳресе, партипе государство умĕнче чееленме, улталама пăхакан çынсем те пур-ха. Вĕсенчен пĕрисем парти умĕнче сăмах параççĕ, часах ун çинчен манса каяççĕ, парторганизаци йышăннă решенисем çине формально пăхаççĕ.

Пушă сăмах ан пултăр тесе, эпир çак тĕслĕхе кăтартса парасшăн. 1952 çулхи сентябрĕн 28-мĕшĕнче райком бюровĕнче «Кзыл юлдуз» колхоз председателĕ коммунист Ахметов юлташпа пуçламăш парторганизаци секретарĕ Араев юлташ обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли план мĕнле пурнăçланса пыни çинчен отчет туса пачĕç.

Ун чухне колхоз обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарас тĕлĕшпе чăтма çук начар ĕçленĕ. Ахметов тата Араев юлташсем бюрора плана пур выльăхсем енĕпе те çывăх кунсенче тултарма сăмах пачĕç.

Райком бюровĕ, йышăннă решение мĕнле пурнăçланине тĕрĕслес шутпа, 1952 çулхи октябрĕн 21-мĕшĕнче Ахметов тата Араев юлташсен отчечĕсене тепĕр хут сӳтсе яврĕ. Бюрора çакă палăрчĕ: вĕсем хăйсем панă сăмаха часах манса кайнă, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарма майсем çителĕклĕ пулнă пулин те, ку тĕлĕшпе нимĕн те туман. Çапла вара, вĕсем парти умĕнче улталлă ĕç тунă, суя çул çине тăнă. Араевпа Ахметов коммунистсем çывăх вăхăтрах татăклă улшăну тума тата тепĕр хут сăмах пачĕç. Ку хутĕнче те парти комитетне суйрĕç. Колхоз паянхи куна çитсе те выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарман.

Хăшпĕр коммунистсем партирен чăнлăха пытарма, хăйсен ĕçне яланах якатса кăтартма пăхаççĕ, плана тултарни çинчен калакан отчетсем çумне хушса çыраççĕ.

Мичурин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ коммунист Гаврилов юлташ государствăн ертсе пыракан органĕсене «7-мĕш форма» тăрăх отчет тăратнă. Отчета вăл алă пусса тата пичет пусса çирĕплетнĕ. Унта колхоз 1952 çулхи октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне пĕтĕм лаптăкри тымарçимĕçе, октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне пĕтĕм лаптăкри çĕрулмине кăларса пухса кĕртни çинчен каланă. Анчах та çĕрулми кăларас ĕçе ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне, тымарçимĕç пухса кĕртес ĕçе ноябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне çеç «вĕçленĕ». Отчетра кăтартнă тăрăх, çĕрулмине пĕтĕм лаптăкран пухса кĕртнĕ. Чăннипе илсен вара 0,17 гектар çинчи çĕрулмине халĕ те кăларман, вăл юр айне пулнă, шăннă, сая кайнă.

Гаврилов коммунист государствăна улталас çул çине тăнă. Вăл чăнлăха пытарса киревсĕр ĕç тăвать. Ку çеç мар, Гаврилов юлташ хăй тунă йăнăшсене нихçан та йышăнмасть, яланах тунать, хăй çинчен сирет.

Парти членĕн ĕçсем начар пулнине пытарса тăма, парти тата государство интересĕсене сиен кӳрекен ĕçсем патĕнчен иртсе кайма право çук. Анчах та çакна хăшпĕр коммунистсем манаççĕ. Райсовет исполкомĕн суту-илӳ пайĕн заведующийĕ Кабаев юлташ чайнăй заведующийĕ Вахитов киревсĕр ĕçсем тунине пĕлнĕ пулсан та, ун çинчен ниçта та пĕлтермен, хăй те нимĕнле мера та йышăнман. Пачах урăхла, унăн киревсĕр ĕçĕсене пытарса тăнă. Ку ĕçе КПСС райкомĕ хутшăннă хыççăн тин Вахитова ĕçрен кăларнă. Кабаев юлташ парти умĕнче хăйне тĕрĕс мар тытнине урăх тĕслĕхсемпе те кăтартса пама пулать. Вăл хăшпĕр чухне аялтан килекен критикăна хĕсес çул çине тăрать.

Парти хăйĕн речĕсенче ултавçăсене, хăйсене тĕрĕс мар тыткалакан çынсене чăтса тăма пултараймасть, мĕншĕн тесен çавăн пек çынсем хăйсен киревсĕр ĕçĕсемпе партине шанса тăрассине хавшатаççĕ. Ултавçăсене тӳрă шыв çине кăлармалла, вĕсене наказани памалла, вĕсенчен хăтăлмалла. Кунпа пĕрлех коммунистсене тĕрĕс те тӳрĕ çын пулма, партипе государство интересĕсене çирĕп сыхласа тăма воспитани памалла. Кун çинчен КПСС Чкаловски райкомĕн пĕр минутлăха та манмалла мар.

И. МЕШКОВ.

Чкаловски районĕ.

Парти членĕн ячĕ—хисеплĕ ят

Çак кунсенче Доронин ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ. Парторганизаци секретарĕ С. Филиппов юлташ хăйĕн отчетĕнче колхоз хуçалăхĕ çирĕпленсе пыни çинчен каласа пачĕ.

Коммунистсем тăрăшса ĕçленипе колхоз тырпула вăхăтра пухса кĕртнĕ, государство умĕнчи парăмсене пурне те срокчен парса татнă. Выльăхсем валли витесем хунă тата ытти те.

Анчах колхозра çитменлĕхсем пите нумай. Тырпул тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăша ӳстерессишĕн кĕрешесси парторганизаци ĕçĕнче тĕп вырăн йышăнса тăман. Çавăнпа ĕнтĕ 1952 çулта гектартан 7,98-шер центнер кăна тĕштырă пухса кĕртнĕ, кашни ĕнерен 600 литр сĕт, кашни сурăхран 2 килограмм çăм, кашни чăхран 25 çăмарта кăна илнĕ.

Хăшпĕр коммунистсем хăйсене шанса панă ĕçе кирлĕ пек туса пыман пирки купăшсем илесси чакнă.

Тухса калакансем ĕçри çитменлĕхсем мĕнрен килнине лайăх кăтарса пачĕç. Парторганизацире 26 коммунист. Пурте вĕсем колхоз производствин ответлă участокĕсенче ĕçлеççĕ. Анчах, ман шутпа, коммунист производствăра хăй кăна тӳрĕ кăмăлпа ĕçлени çителĕксĕр. Унăн хăйĕн çемйине те кăтартуллă тăвассишĕн тăрăшмалла. Иртнĕ çулта мĕн пулчĕ-ха? 16 коммунистăн арăмĕсем, пĕр сăлтавсăрах, ĕçкунĕ тумалли минимума пурнăçламан. Сăмахран, К. Игнатьев юлташ арăмĕ пĕр ĕçкунĕ те туман.

П. Яковлев коммунист хăй ирĕкĕпех колхозран тухса кайнă. Халĕ тĕрлĕ артельсенче хуралçăра çӳрет. Колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ, ялхуçалăх артелĕн Уставне пăхăнманшăн колхозран кăларма йышăнсан, Яковлев юлташ колхоза таврăнма сăмах пачĕ. КПСС Канаш райкомĕн бюровĕ те, уйрăм решени йышăнса, Яковлев юлташа колхоза таврăнма хушнă. Анчах хут тӳсет. Çулталăк иртрĕ, Яковлев юлташ паян та колхоза таврăнмасть, партбюро та шарламасть.

Парторганизаци коммунистсене воспитани парас ĕçе çителĕксĕр туса пырать. Коммунистсене парти членĕн ятне çӳлте тытса пыма вĕрентмест.

Йăнăшсем тăвакан коммунистсем çинчен парти пухăвĕсенче сӳтсе явмаççĕ. Парторганизацире çивĕч критика çук.

Коммунистсем хăйсен политикăллă пĕлĕвĕпе культурине ӳстерессишĕн куллен тăрăшмаççĕ. Сăмахран, ялти библиотекăра вулакансен йышĕ 300 çынна яхăн. Анчах вĕсен шутĕнче икĕ коммунист кăна. КПСС Канаш райкомĕ пропагандист тупса паман пирки, 18 коммунист халĕ те ниçта та вĕренмест.

И. МУКШИН.

Канаш районĕ.

Çирĕп дисциплина кирлĕ

Партире икĕ дисциплина—пĕри руководительсемшĕн, тепри рядовой членсемшĕн—пулма пултараймасть. Партин пур коммунистсемшĕн те,—вĕсен тава тивĕçлĕ ĕçĕпе вĕсем мĕнле вырăнта ĕçленине пăхмасăр,—пĕр дисциплина, пĕр закон. Партипе государство дисциплинине пăсни киревсĕр ĕç пулса тăрать, партие сиен кӳрет, çавăнпа та дисциплинăна пăсакансем парти ретĕнче пулма тивĕçлĕ мар.

КПСС Уставĕнчи çак сăмахсене парти членĕсен анлă масси чĕререн ырлать.

Анчах пирĕн райсовет исполкомĕнчи пуçламăш парторганизацинчи хăшпĕр коммунистсем партипе государство дисциплинине пăсаççĕ. Сăмахран, ялсемпе колхозсенчи строительство пайĕн заведующине, парти членне И. Гордеев юлташа илер. Унăн хăйне евĕрлĕ «дисциплина» пур. Вăл ĕç вăхăтĕнчех ĕçсе ӳсĕрлет, обществăллă вырăнсенче сулланса çӳрет, тепĕр чухне пачах ĕçе тухмасть. Район колхозсенчи строительство ĕçĕсен планне тултараймарĕ.

Районти апат-çимĕç комбиначĕн директорне В. Степанов коммуниста, пĕр енчен пăхсан, хурлама çук темелле. Комбинат производство планне тултарса пырать. Анчах туса кăларакан продукцин пахалăхĕпе ассортиментне илсен, вăл государство дисциплинине тăтăшах пăсса пырать, вăтам цифрăсемпе лăпланса ларать. Степанов юлташ парти дисциплинине те час-часах пăсать. Унăн нихçан та парти пухăвĕсене йĕркеллĕ çӳрес йăла çук. Кашни çулах ăна партшкулсемпе кружоксенче вĕренме çыраççĕ. Анчах нихăш çул та вĕренме çӳремест.

Райсовет исполкомĕнчи парторганизацире партипе государство дисциплинине пăсса пыракан коммунистсем татах пур. Анчах партбюро тата унăн секретарĕ Т. Калитов юлташ вĕсемпе килĕшсе пыраççĕ, тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ, йăнăшсене çийĕнчех тӳрлетме пулăшмаççĕ. Калитов юлташ хăй те государство дисциплинине çителĕксĕр пурнăçласа пырать. Вăл ертсе пыракан çул-йĕр пайĕ плана çулсеренех тултармасть.

Партипе государство дисциплинине пăсакансене хирĕç татăклăн кĕрешменни пысăкрах çитменлĕхсем патне илсе пырать. Кунта çак тĕслĕх кăтартса пани вырăнлă. Райсовет исполкомĕн кинофикаци пайĕн начальникĕ пулса И. Казаков коммунист ĕçлерĕ. Вăл районта кино кăтартас ĕçе япăхтарсах ячĕ. Ĕç вăхăтĕнче час-часах ӳсĕр çӳретчĕ. Работниксем хушшинче те ĕç дисциплинине хавшатса ячĕ. Апла пулсан та партбюро Казаков юлташ пирки нимĕнле мера та йышăнмарĕ.

В. ДОЛГОВ.

Советски районĕ.

Заводри парторганизаци XIX-мĕш съезд хыççăн

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ пирĕн партипе Совет государстви историйĕнче çĕнĕ тапхăр пуçласа ячĕ. Парти съезчĕ пирĕн çĕршывра коммунизмлă общество тумалли çул-йĕре кăтартса пачĕ. И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ çĕнĕ произведенийĕ социализмран майĕпен коммунизма куçмалли çул-йĕре çутатса тăрать.

Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем пирĕн заводри рабочисемпе работницăсене, инженерсемпе техниксене чаплă çĕнтерӳсем тума çĕнĕ вăй-хăват пачĕç, вĕсен политикăллă тата производствăллă хастарлăхне вăйлатрĕç. 1952 çулхи ноябрь уйăхĕнчи плана завод 107,6 процент тултарчĕ пулсан, декабрь уйăхĕнче пирĕн коллектив тата та пысăкрах çĕнтерӳ турĕ: ку уйăхри плана завод 117,2 процент тултарчĕ. Çулталăкри плана завод декабрĕн 24-мĕшĕнче тултарса, çулталăк вĕçлениĕ тĕле планран ирттерсе Тăван çĕршыв валли 3,7 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ.

Анчах çак çитĕнӳсене çеç курни, завод ĕçĕнчи çитменлĕхсене курмасăр тăни пысăк йăнăш туни пулнă пулĕччĕ. Пирĕн завод куллен-кун пĕр тикĕс ĕçлесе пыма хăнăхса çитеймест-ха. Уйăх пуçламăшĕнче ĕçсĕр тăратпăр е вăраххăн ĕçлетпĕр, уйăх вĕçленес умĕн—штурмлама тытăнатпăр. Брак нумай пирки те пысăк тăкаксем пулаççĕ.

Халĕ завод 1953 çулхи программăна пурнăçлать. Январь уйăхĕнче пирĕн декабрь уйăхĕнчинчен чылай ытларах продукци туса кăлармалла.

Пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана ăнăçлă тултарасси партилле-организацилле тата политикăллă ĕçе анлăн туса пынинчен, коммунистсен производствăри авангардлă ролĕ пысăк пулнинчен килет. Партин çĕнĕ Уставĕ парти членĕсем умне пысăкрах требованисем кăларса тăратрĕ. Парти членĕсене Устав хушнисене çирĕппĕн пурнăçласа пыма воспитани пани — партиллĕ ĕçе вăйлатма чи кирлĕ условии.

Парти членĕн «ĕçре кăтартуллă пулмалла, хăйĕн ĕçĕн техникине вĕренсе пĕлмелле, хăйĕн производствăри, ĕçри квалификацине пĕрмаях ӳстерсе пымалла, совет стройĕн никам тĕкĕнеймми тасине никĕсĕ пулса тăракан обществăллă социализмлă пурлăха пур майсемпе те сыхласа усрамалла тата тĕреклетмелле», тенĕ КПСС Уставĕнче.

Заводри коммунистсем хăйсен çак пархатарлă тивĕçне чыслă пурнăçласа пыраççĕ. Паллă фрезеровщик Королев юлташ хăйĕн ĕçĕн техникине тĕплĕн вĕренсе çитнĕ. Çакă ăна пилĕк çуллăх плана икĕ çул хушшинчех тултарма пулăшрĕ. Королев юлташ хăйĕн опычĕ тăрăх ĕçлеме ытти рабочисене вĕрентет. Сăмахран, çамрăк рабочи, коммунист Краснов юлташ халĕ хăй пĕччененех кăткăс ĕçсене тума вĕренсе çитрĕ.

Теориллĕ пĕлӳпе ĕçри квалификацине куллен ӳстерсе пыракан коммунистсем пирĕн заводра нумай. Парторганизаци рабочисем-коммунистсем умне çакăн пек задача лартнă: вĕсен, производствăра ĕçленĕ вăхăтрах, куллен вĕренсе пĕлӳ тĕлĕшĕнчен инженерсемпе тата техниксемпе танлашма тăрăшмалла. Хальхи вăхăтра касхи вăтам шкулта, касхи техникумра, квалификацие ӳстермелли тата стахановла шкулсенче мастерсемпе рабочисем 900 çын ытла вĕренеççĕ.

Анчах хăшпĕр коммунистсем, партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсенчен хăйсем умне тухса тăнă задачăсене тĕплĕн ăнланса илеймен-ха. Вĕсем хăйсен квалификацине ӳстерес ыйту çине сăмалттайла пăхаççĕ. Вĕренесси вăл—манăн ирĕк, вĕренме кăмăл пур пулсан—вĕренетĕп, вĕренес килмесен ман пирки ыттисен ĕç çук, теççĕ пулас вĕсем. Ĕç квалификацине, теориллĕ пĕлĕве ӳстересси харпăр хăй ĕçĕ кăна мар. Вăл пирĕн государство интересĕсемшĕн кирлĕ. Куллен вĕренменни ака мĕн патне илсе пырать: коммунист Добровинский юлташ нумай çул хушши цехри контролер пулса ĕçлерĕ, анчах вăл вĕренмерĕ, хăйĕн квалификацине малалла ӳстерме тăрăшмарĕ, çавна пула куллен ӳсе пыракан требованисенчен юлма пуçларĕ, халĕ ĕнтĕ ăна пĕчĕкрех ĕçе куçармалла пулчĕ. Малалла та вĕренмесен, Добровинский юлташа ку ĕçрен те хăтарма тивет.

Çĕнĕ Устав парти членĕсене массăсемпе çыхăнса тăрассине куллен çирĕплетсе пыма, ĕççынниÿсен ыйтăвĕсемпе вĕсене мĕн кирлине вăхăтра туса пама, партире тăман массăсене парти политикипе решенийĕсен тĕп шухăшĕсене ăнлантарса пама хушать.

Заводри парторганизацисем кашни коммуниста парти ĕçне активлă хутшăнтарма тăрăшаççĕ. Парторганизацири нумай коммунистсем стена хаçат редакторĕсем, агитаторсем, лекторсем тата докладчиксем пулса ĕçлеççĕ. Агитацилле тата пропагандăллă пĕтĕм ĕçе завод коллективне Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тавра тачăрах пĕтĕçтерес, рабочисемпе работницăсене, инженерсемпе техниксене совет патриотизмĕ майлă воспитани парас тĕллевпе туса пыратпăр.

Парторганизаципе массăсем хушшинчи çыхăнăва ытларах çирĕплетес тата партрганизацин коллективри ертсе пырас ролĕпе влиянине ӳстерес шутпа, парти комитечĕ çĕнĕрен икĕ парторганизаци турĕ. КПСС хула комитечĕ йышăннă тăрăх, çак кунсенче тата икĕ цехра çĕнĕрен парторганизацисем тума палăртнă. Пысăкрах цехсенче, парторганизацисемсĕр пуçне, парти групписем 10 тунă.

Анчах цехсенчи парторганизацисем, çавăн пекех заводри партком та партгруппăсен ĕçне çителĕксĕр ертсе пыраççĕ, вĕсене сахал пулăшаççĕ. Цехсенчи парторганизацисен, партгруппăсен организаторла ĕçĕпе кĕрешӳри пултарулăхне ӳстересси парткомăн пысăк задачи пулса тăрать.

Парторганизаципе массăсем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетес, парторганизацисен кĕрешӳри пултарулăхне ӳстерес ĕçре критикăна самокритика хăватлă хĕçпăшал пулса тăраççĕ. Партин çĕнĕ Уставĕ парти членĕсене самокритикăпа аялтан килекен критикăна аталантарса пыма, ĕçри çитменлĕхсене тупса палăртма тата вĕсене пĕтерсе пыма, çитĕнӳсемпе шавлăн мухтаннине тата ĕçри ăнăçусемпе çырлахса ларнине хирĕç кĕрешме хушать.

Заводри коммунистсем тата партире тăман массăсем Уставри çак положенине пĕтĕм чĕререн ырлаççĕ. Парти тата рабочисен пухăвĕсенче коммунистсем, рядовой рабочисем ĕçри çитменлĕхсене хăюллăрах тата активлăрах критиклеме пуçларĕç. Халĕ парти комитечĕ уйрăм работниксен çитменлĕхĕсене кăтартса паракан çырусем чылай илет. Нумай рабочисем парткома пырса, цехри е участокри йĕркесĕрлĕхсем çинчен каласа параççĕ.

Анчах самокритика, уйрăмах аялтан килекен критика кирлĕ чухлĕ саралса пырать теме çук-ха. Заводри уйрăм работниксем аялтан килекен критика çине бюрократла-чиновникла пăхаççĕ, критикăшăн хĕсекенсем те тĕл пулаççĕ. Рабочисен пухăвĕнче токарь-стахановец Судаков юлташ цехри аслă мастерĕн Меламед юлташăн çитменлĕхĕсене критикленĕ. Вăл, стахановец кăтартса панă çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерес вырăнне, Судаков юлташа цехран хăваласа яма хăтланнă. Критикăна çавнашкал сĕмсĕррĕн хĕснĕшĕн Меламед юлташа ĕçрен кăларнă, урăх цеха рядовой рабочи пулса ĕçлеме куçарнă.

Критикăна çавăн пек куçа кĕретĕн хĕсни нумай мар, анчах критикăна вăрттăн хĕснисем час-часах тĕл пулаççĕ. Заводри ертсе пыракан хăшпĕр работниксем кашни пухурах критикăна вăйлатма кирли çинчен сăмах çаптараççĕ, ĕçре вара критикăран хăраççĕ, критикăна сарса яма чăрмантарма хăтланаççĕ. Парти членĕ, стахановка Виноградова юлташ рабочисен пĕр пухăвĕнче брак нумай пулнăшăн цех руководителĕсем хăйсем айăплă пулнине кăтартса парса, вĕсене хытă критикленĕ.

Брака пĕтерме васкавлă мерăсем йышăнас вырăнне, цех начальникĕ-коммунист Каневский юлташ сĕннипе старши технолог-коммунист Герасимов юлташ цехри партбюрона Виноградова юлташа айăпласа жалоба çырса панă. Жалоба çырма çакăн пек сăлтав тупнă: Виноградова юлташ пухура руководительсене «кӳрентермелле» хытă сăмахсем каланă, тенĕ. Виноградова юлташа хӳтĕлес, ирттĕнсе кайнă руководительсене йĕркене кĕртес вырăнне, цехри партбюро Виноградова юлташа «хытă сăмахсем» калама юраманнине тата хăйне «тыткалама пĕлменнине» кăтартса астутарнă.

Заводри партком çак ĕçе ятарласа пăхса тухрĕ. Вăл цехри партбюро йышăннă постановление пăрахăçларĕ, критикăна сĕмсĕррĕн пăснăшăн цех начальникне Каневский юлташа выговор пачĕ, цехри парторганизаци секретарьне Александрова юлташа, вăл çак ĕçре парти кăтартăвĕсене пăснине кăтартса пачĕ.

ВЛКСМ членĕ Определенова юлташ парткома пырса парти членĕн Павлов юлташăн çитменлĕхĕсем çинчен каласа пачĕ. Партком комсомолец пĕлтернисене тĕрĕслерĕ, вĕсем пурте тĕрĕс пулчĕç. Нумаях пулмасть Павлов юлташ Определенова юлташа ĕçрен кăларма ыйтса завод директорне хут çырса панă. «Цехри çитменлĕхсем çинчен парткома жалобăсем çыракан çын пур чухне эпĕ цех ĕçне ертсе пыма пултараймастăп, мĕншĕн тесен Определенова юлташ цех начальникне, цехри организацисене хисепе хумасть, вĕсен авторитетне путарать», тесе çырать вăл.

Пĕр Павлов юлташ кăна мар, ытти хăшпĕр работниксем те çавăн пек шутлаççĕ. Хăйсене пăхăнса тăракан рядовой çынсем ĕçри çитменлĕхсене кăтартса пани вĕсен авторитетне путарни, хисеплеменни пулать имĕш. Заводри партком çавнашкал тĕрĕс мар шухăшлакан çынсене хирĕç шеллесе тăмасăр кĕрешет, вĕсене самокритикăпа аялтан килекен критикăна хисеплеме воспитани пама тăрăшать, парти Уставĕ хушнисене çирĕп пурнăçласа пыма вĕрентет.

Пирĕн ĕçри чылай çитменлĕхсем кадрсен политикăллă-идейăллă ăнланулăхĕ пысăк марринчен килеççĕ. Партилле пропагандăна кучухнехи требованисен шайне çити ӳстермен-ха. Ку ĕçе пĕрмай вăйлатса пыни кирлĕ. Кашни коммунистăн хăйĕн ăнланулăхне ӳстерес, марксизм-ленинизм никĕсĕсене вĕренес тĕлĕшпе куллен ĕçлемелле.

Çак вĕренӳ çулĕнче заводри партком коммунистсене тата кадрсене марксизм-ленинизм теорийĕпе хĕçпăшаллантарма 19 политшкулпа кружок организацилерĕ. Парти активĕ валли парти шкулĕ уçнă. Заводри ертсе пыракан работниксем социализмлă предприятисен экономикине семинарта вĕренеççĕ. Кун пек семинарсем заводра иккĕ ĕçлеççĕ. 108 çын марксизм-ленинизм теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренет. КПСС хула комитечĕн марксизм-ленинизмăн касхи университетĕнче 16 çын вĕренет. Комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем валли 23 кружок организациленĕ.

Партком кружоксен, политшкулсен ĕçĕпе куллен интересленет, харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсем хăйсен вĕренӳ планĕсене мĕнле пурнăçланине асăрхаса тăрать. Хальхи вăхăтра политшкулсемпе кружоксенче пуринче те партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене вĕренме тытăнчĕç.

И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ çĕнĕ произведенине, партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене тата съездра И. В. Сталин юлташ каланă сăмаха вĕренни пирĕн коммунистсене, кадрсене тата мĕнпур ĕççыннисене коммунизм тумалли аслă программăна хĕçпăшаллантарать.

Г. ШУВАЛОВ,

Шупашкарти Çелĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри партком секретарĕ.

Суту-илӳ ӗҫӗнчи культурлӑха ӳстерер!

Шӑмӑршӑ районӗнчи потребительсен обществи 1952 ҫулта таварсӗм ваккӑн сутмалли плана срокчен, декабрӗн 21-мӗшӗ тӗлне тултарчӗ. Тӑхӑр уйӑх хушшинче районта тавар ҫаврӑнӑшӗ, 1951 ҫулхи тӑхӑр уйӑхра пулнипе танлаштарсан, 17,8 процент ӳснӗ. Райпо ҫулталӑк хушшинче услам илмелли плана тӑхӑр уйӑхра 131,7 процент чухлӗ пурнӑҫланӑ. Райпо тавар ҫаврӑнӑшӗ енӗпе пӗлтӗрхи иккӗмӗш кварталтанпа Чӑвашсоюз системинче яланах пӗррӗмӗш вырӑн йышӑннӑ. Райпо правленийӗ халӑха кооперацие явӑҫтармалли тата пай укҫи пухмалли плана та ирттерсе тултарнӑ, район центрӗнче культура таварӗсемпе суту-илӳ тӑвакан ҫӗнӗ магазин уҫнӑ. Вырӑнта туса хатӗрленӗ япаласем (урапа-ҫуна, кӑмрӑк, смала тата ыт. те) 350 пин тенкӗлӗх сутнӑ.

Суту-илӳ ӗҫӗнче Ҫӗнӗ Чукалти магазинти продавщица Молоствова, Пӑчӑрлӑ Пашъелӗнчи продавщица Базарова, Анат Чаткасри магазинти продавец Тихонов юлташсем уйрӑмах лайӑх ӗҫлени палӑрчӗ. Вӗсене кооперации членӗсен уполномоченнӑйӗсен пухӑвӗ йышӑннӑ тӑрӑх икшер хутчен преми пачӗҫ.

Ӗҫсыннисен пурнӑҫӗ лайӑхланнӑ тата культурӑллӑ шайӗ ӳснӗ май, вӗсем паха япаласем ытларах туянма тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫулталӑк хушшинче районти халӑха ҫӗвӗ машинисем, самоварсем, велосипедсем, тимӗр кроватьсем тата ытти культура таварӗсем нумай сутнӑ. Халӗ ялти ӗҫсыннисем паха йышши, хаклӑ тӑракан пустав, ҫӑм тата пурҫӑн пирвӑрӑ магазинсемпе лавккасене кӑларсанах илсе пӗтереҫҫӗ. Ҫавӑн пек таварсем туянас енӗпе ӗҫсыннисен ыйтӑвӗсем ытларах та ытларах ӳссе пыраҫҫӗ, халлӗхе райпо вӗсен ыйтӑвӗсене пӗтӗмпех тивӗҫтерейменст-ха.

Шӑмӑршӑ райповӗ тунӑ ҫитӗнӳсем вӗсем—суту-илӗве лайӑхлатас тӗлӗшпе районти партипе совет органӗсем кулленех тӑрӑшса ӗҫлении результачӗ. КПСС райкомӗ суту-илӳ работникӗсен ответлӑхне ӳстерме тата ӗҫре пулӑшма тӑрӑшрӗ. Парти райкомӗпе райисполком суту-илӳ работникӗсен канашлӑвӗсене час-часах ирттерме тытӑнчӗҫ. Районти партипе совет активӗ ялсене кайсан, магазинсемпе лавккасем мӗнле ӗҫленипе ытларах интересленет, вӗсен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене палӑртса, ҫав ҫитменлӗхсене сиенчех пӗтерме тӑрӑшать. Суту-илӳри йӗркесӗрлӗхсемпе ҫитменлӗхсене общественность, сивӗччӗн критиклени те магазинсемпе лавккасен тата столовӑйсен ӗҫӗсене лайӑхлатма нумай пулӑшрӗ. Юлашки вӑхӑтра суту-илӳ работникӗсем валли политикӑллӑ ыйтусемпе докладсем тата лекцисем чылай ирттернӗ.

Анчах райпо пур енчен те лайӑх ӗҫлет теме ҫук-ха, унӑн ӗҫӗнче халӗ те пысӑк ҫитменлӗхсем пур. Райпо правленийӗ ҫаврӑнӑҫуллӑрах пулнӑ пулсан, партипе правительство пулӑшӑвӗпе туллин усӑ курнӑ пулсан, ҫак ӗҫре тата пысӑкрах ҫитӗнӳсем тума май килеччӗ.

Райпо уполномоченнӑйӗсен пухӑвӗнче райпо председательне Леонтьев юлташа, райпон суту-илӳ пайӗн заведующине Гладков юлташа, чайнӑй заведующине Алеев юлташа суту-илӳри йӗркесӗрлӗхсемшӗн хытӑ критиклерӗҫ. Райпо правленийӗ район центрӗнчен аякри ялсенчи—Пӑчӑрлӑ Пашъелти, Вырӑс Чукалти, Ҫӗнӗ Чукалти, Шамкайри магазинсемпе лавккасен ӗҫӗсем ҫине сахал пӑхать, вӗсен ӗҫӗсене лайӑхлатма ҫителӗклӗ тӑрӑшмасть. Кунти магазинсене кулленхи кирлӗ таварсем—тӑвар, краҫҫын, супӑнь, пирус вӑхӑтран вӑхӑта ҫеҫ илсе пыраҫҫӗ. Вӗсенче краҫҫын сайра хутра ҫеҫ пулать. Краҫҫын илме ҫынсен кӳршӗри районсене кайса ҫӳреме тивет.

Районта совет суту-илӗвӗн йӗркине пӑснисем те пулаҫҫӗ-ха. Уйрӑм продавецсем хӑшпӗр йышши кирлӗ таварсене хӑйсен пӗлӗшӗсене вӑрттӑн, пытарса сутаҫҫӗ. Кӗнекесем сутас ӗҫе начар йӗркеленӗ. Район центрӗнчи апат-ҫимӗҫ магазинӗпе культура таварӗсен магазинӗнче, Никишинӑрипе Кивӗ Чукалти магазинсенче санитари правилисене пӑсаҫҫӗ, хӗллехи вӑхӑтра вут хутса ӑшӑтмаҫҫӗ. Пуянкассинчи лавкка, район центрӗнчи апат-ҫимӗҫ магазинӗпе культура таварӗсен магазинӗ ӗҫ вӑхӑтӗнчех час-часах хупӑ тӑраҫҫӗ.

Чайнӑйра апат-ҫимӗҫе лайӑх хатӗрлемеҫҫӗ, чее халӗ те хуранта вӗретеҫҫӗ, ӑна вӗретме кипятильник туянман.

Райпо правленийӗн председателӗ Леонтьевпа бухгалтерӗ Архипов юлташсем растратчиксене сиенчех ответ тыттарма тата салатса пӗтернӗ укҫана шыраса илме ҫителӗксӗр тӑрӑшаҫҫӗ. Иртнӗ ҫулталӑк хушшинче района ревизи тума Чӑвашсоюзран 3—4 хутчен представительсем килсе кайрӗҫ, анчах вӗсем те ку енӗпе нимӗнле мерӑсем те йышӑнмарӗҫ.

Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съезчӗн решенийӗсенче тавар ҫаврӑнӑшне вӑйлатас тӗлӗшпе пысӑк задачӑсем кӑларса тӑратнӑ. Ҫав задачӑсене пурнӑҫлама пирӗн лайӑх майсем тата условисем пур. Пирӗн промышленность халӗ вӑрҫӑ чухнехинчен темӗн чухлӗ нумайрах тавар туса кӑларать. Суту-илӳ работникӗсен ҫав таварсене хӑвӑртрах халӑх патне, илекенсем патне ҫитерме тӑрӑшас пулать. Суту-илӳ ӗҫӗнчи культурлӑха ӳстермелле. Совет суту-илӗвне ҫӗнӗ, татах та ҫӳлӗрех сыпӑка ҫӗклес, тавар ҫаврӑнӑшне тата ытларах вӑйлатас пулать. Суту-илӳ ӗҫӗнчи паха опыта анлӑ сарни, суту-илӳ работникӗсем хушшинче социализмлӑ ӑмӑртӑва вӑйлатни кирлӗ. Суту-илӗве лайӑхлатассишӗн тӑрӑшасси—суту-илӳ работникӗсемпе пӗтӗм совет общественноҫӗн тивӗҫӗ.

В. АТЛАШЕВА.



Сӑр хӗрринчи вӑрманта. Ҫӗмӗрле вӑрманпромхозӗн Речной вӑрман пунктӗнчен поездпа йывӑҫ турттараҫҫӗ.
Г. ХАРЛАМПЬЕВПА В. ТИМКИН фотоӳкерчӗкӗ.

Вӗрентӳпе воспитани ӗҫне лайӑхлатмалла

ЧУРАЧӐК. Январӗн 5—6-мӗшӗсенче учительсен районти канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлу КПСС XIX-мӗш съезчӗн историллӗ решенийӗсем тӑрӑх шкулсенче вӗрентӳпе воспитани ӗҫне лайӑхлатса пырасси ҫинчен сӳтсе яврӗ.

Докладчик КПСС райкомӗн секретарӗ С. Аллюров юлташ Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви халӑха вӗрентме тӑрӑшни ҫинчен каларӗ. Унтан вӑл халӑха вӗрентес ӗҫ районта мӗнле пулса пыни ҫинчен каласа пачӗ. 1952—1953-мӗш вӗренӳ ҫулӗнче шкула ҫӳреме вӑхӑт ҫитнӗ ачасене пурне те вӗренӗве хутшӑнтарнӑ.

Шкулсенче вӗрентӳпе воспитани ӗҫне лайӑхлатса пыма кирлӗ условисем ҫителӗклӗ. Учительсем ҫамрӑк ӑрӑва коммунистла воспитани парас тӗлӗшпе тимлесе ӗҫлеҫҫӗ. Канашлу Кукшакассинчи, Чӑрӑшри, Шупуҫӗнчи ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулсен директорӗсен В. Никифорова, Т. Васильева, А. Абрамов юлташсен, Чӑрӑшри вӑтӑ учительницӑн А. Антонова, Еншик Чуллӑри—М. Дмитриев, Иккӗмӗш Ҫӗньялти М. Васильева юлташсен ӗҫри лайӑх опычӗсене палӑртрӗ.

Ҫавӑнпа пӗрлех районти шкулсен ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем пур-ха. Вӗренӳ ҫулӗн пӗррӗмӗш ҫурҫулӗнче вӗренӳре ӗлкӗрсе пырайманнисем пурӗ 875 ача пулнӑ. Чурачӑкри вӑтам шкулта, Ӑнтавӑшрипе Тӗрерти ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулсенче вӗренӳре ӗлкӗрейменнисем нумай.

Вӗрентӳпе воспитани ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсен тӗп сӑлтавӗ хӑшпӗр учительсем хӑйсен ӗҫри ӑсталӑхне тата идейӑллӑ шайне ӳстерме тӑрӑшманнинче.

Районти сутӗҫ пайӗ шкулсен коллективӗсене ҫителӗксӗр ертсе пырать-ха. Вӗренӳ ҫулӗн пӗррӗмӗш ҫурҫулӗнче районти шкулсенчен виҫҫӗмӗш пайне кӑна инспекторсем пырса тӗрӗсленӗ. Канашлура педагогика кабинечӗн заведующине Семенов юлташа учительсене методикӑллӑ пулӑшу парас тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫленӗшӗн хытӑ критиклерӗҫ.

Канашлу решенийӗнче партин XIX-мӗш съезчӗн кӑтартӑвӗсене пурнӑҫлама шкулсенчи вӗрентӳпе воспитани ӗҫне лайӑхлатма кирлине, политехникӑллӑ вӗрентӗве куҫма хатӗрленес енӗпе мӗнле ӗҫсем тумаллине палӑртнӑ. Учительсем секцисене пухӑнса, пӗр-пӗрин опычӗпе паллашрӗҫ, вӗренӳ ҫулӗн иккӗмӗш ҫурҫулӗнчи вӗрентӳ планӗсене туса хатӗрлерӗҫ.

И. ИВАНОВ.

ИШЛЕЙ. Учительсен январьти канашлӑвӗнче юлашки вӑхӑтра районти шкулсенче вӗрентӳпе воспитани ӗҫӗ лайӑхланни палӑрчӗ. Сыпайкассинчи, Мамӑшри ҫичӗ ҫул вӗренмелли, Чӑрӑшкассинчи, Хачӑкри, Ырашпулӑхри, Чаканарти пуҫламӑш шкулсем ку тӗлӗшпе лайӑх тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ. Ҫав шкулсенчи ачасен 93—96 проценчӗ вӗренӳре ӗлкӗрсе пырать. Ишек вӑтам шкулӗнче вӗрентекен РСФСР тата Чӑваш АССР шкулӗсен тава тивӗҫлӗ учительници Х. Дмитриева, Ишлей вӑтам шкулӗнчи 5—6-мӗш классене вӗрентекен учительница Оборина, Анат Кӗнерти ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулти Елькин, Явӑш шкулӗнчи Осипова юлташсем хӑйсене шанса панӑ ӗҫе тӳрӗ кӑмӑлпа, пысӑк пахалӑхпа туса пыраҫҫӗ.

Анчах хӑшпӗр шкулсенчи учительсем халӗ те ӗҫри ответлӑха туйса ӗҫлемеҫҫӗ, уроксене кирлӗ пек хатӗрленсе ирттермеҫҫӗ. Ҫавна пула районти шкулсенче 553 ача вӗренӳре ӗлкӗрсе пыман.

Вырӑс чӗлхине, математикӑна, истори вӗрентес ӗҫре пысӑк ҫитменлӗхсем пур. Вӗренӳре ӗлкӗрсе пыман 553 ачаран нумайӑшӗ вырӑс чӗлхипе тата математикӑпа начар паллӑсем илнӗ.

Хальхи вӑхӑтра районти шкулсенче вӗрентекен 39 учителӗн шкулсенче вӗрентме тивӗҫлӗ пӗлӳ ҫук. Анчах вӗсенчен хӑшпӗрисем аслӑ шкулсенче заочно вӗренме тӑрӑшмаҫҫӗ.

Районти сутӗҫ пайӗн заведующийӗ В. Сорокин юлташ кадрсене суйласа илес, вӗсене кирлӗ пек воспитани парас ӗҫе ҫителӗклӗ туса пымасть. Вӑл вӑхӑта Ишлейри вӑтам шкулта преподаватель вырӑнӗнче ӗҫлесе ирттерет. Ҫавна пула вӑл шкул директорӗсемпе заведующийӗсем мӗншӗн начар ӗҫленине тӗплӗн пӗлсе ҫитме, вӗсен ҫитменлӗхӗсене сиенчех тӳрлетме вӑхӑт тупаймасть.

Шкул директорӗсем чылайӑшӗ учительсен ӗҫне тӑтӑшах контроллесе тӑмаҫҫӗ, уроксенче пулмаҫҫӗ. Сутӗҫ пайӗн инспекторӗсем Романовпа Шашкаров юлташсем шкулсенче сахал тата ячӗшӗн ҫеҫ пулаҫҫӗ. Шашкаров юлташ нумай пулмасть Анаткас Маркари ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулта пулнӑ. Кунта вӑл шкул директорӗ ҫинчен панӑ жалобӑна сиелтен тӗрӗсленӗ те тепӗр куннех района тухса кайнӑ. Вӑл учительсене пухса каласма та вӑхӑт тупайман иккен.

ВЛКСМ райкомӗнче ӗҫлекенсем шкулсенче сайра-хутра ҫеҫ пулаҫҫӗ, шкулсенчи комсомол тата пионер организацийӗсене кирлӗ пек ертсе пымаҫҫӗ, ӗҫри лайӑх опыта сармаҫҫӗ.

Шкулсен ӗҫне партин XIX-мӗш съезчӗ кӑларса тӑратнӑ задачӑсене тивӗҫлӗ урӑхлатса ҫӗнетесси, вӗрентӳпе воспитани ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене пӗтерессишӗн кӗрешесси—мӗнпур учительсен тивӗҫӗ.

Ф. МАЛЫШКИН.
В. ЧЕРНОВ.

ТЕАТР

„Ҫемье чысӗ“

Чӑвашсен академи театрӗн коллективӗ Сталинле премий лауреачӗ туркменсен ҫамрӑк драматургӗ Гусейн Мухтаров ҫырнӑ «Ҫемье чысӗ» ятлӑ пьеса лартса кӑтартрӗ. Артистсем умӗнче, уйрӑммӑнах режиссӗр ӗҫне тинтерех кӑна хӑнӑхса пыракан З. Д. Ярдыкова умӗнче пысӑк та кӑткӑс ӗҫсем тӑнӑ.

Автор хӑйӗн пьесинче совет ҫемйин пурнӑҫӗпе ӗҫӗсене кӑтартса парать. Телейлӗ те хаваслӑ пурӑнать ватӑ туркмен Аллан килйышӗ. Алланпа унӑн арӑмӗ Бике ҫичӗ ача ҫуратса ӳстерсе ҫитӗнтернӗ. Вӗсенчен виҫҫӗшӗ Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑра хаяр тӑшмана хирӗҫ паттӑррӑн кӗрешсе вилнӗ. Аллан хӑй чугун ҫулӗ ҫинчи кадровӑй рабочи. Вӑл унта вӑтӑр ҫул ӗҫленӗ ӗнтӗ. Унӑн ывӑлӗ Ата—аспирант-почвовед, Курбан — студент-математик, Язгюль ятлӑ хӗрӗ композитор пулма вӗренет. Ҫапла, ҫак ҫемьере эпир тӗрлӗ профессиллӗ ҫынсене куратпӑр. Вӗсенчен кашниех хӑйӗн ӗҫне хапӑл пулса, тӑрӑшса тӑвать, аслӑ Тӑван ҫӗршыва пӗтӗм чун-чӗрепе парӑнса юратать.

Ҫак пысӑк туйӑма, ӗҫри хастарлӑха, килйышри кӑмӑллӑ хутшӑнӑва театр коллективӗ лайӑх кӑтартса пачӗ. Спектаклӗ пӑхатӑн та—чӑн-чӑн пурнӑҫ вӗресе, тапса-сиксе тӑнине куратӑн, совет ҫемйин телейлӗ пурнӑҫӗшӗн, ырми-канми ӗҫӗшӗн, сутӑ ӗмӗчӗшӗн савӑнатӑн. Пьесӑри ӗҫсем сарӑлса, ӳссе пынӑ майӑн ҫак пӗр ӗмӗтлӗ, пӗр шухӑшлӑ ҫемьере сасартӑк кӗтмен япала, пӗр инкек сиксе тухать. Алланӑн аслӑ ывӑлӗ, колхоз председателӗ пулса ӗҫлекен Байрам, ҫемьери кӑмӑллӑ традицисене пӑхӑнма пӑрахса, обществӑллӑ тӗрӗс ҫул ҫинчен пӑрӑнса, ялхуҫалӑх артелӗн ҫирӗп Уставне пӑсма тытӑнать. Байрам, колхоза килсе тӑракан тӗрлӗ «хӑна-вӗрле» кӑмӑлне юрас тесе, колхоз сурӑхӗсене пусать, «вилнӗ» тесе актпа ҫирӗплетме тӑрӑшать. Анчах та Язгюль савнийӗ—счетоводра ӗҫлекен Алты Солтанов Байрамӑн суя документсене пӑрахӑҫа кӑларать, унӑн киревсӗр ӗҫӗсем ҫинчен ватӑ Алланӑн килйышне каласа кӑтартать.

Ҫемьере халиччен Байрама пурте юратса, пурте хисеплесе тӑнӑ. Вӑл пушӑрах вӑхӑтсенче килле килсе кайни пуриншӗн те праҫник пек туйӑннӑ. Язгюль ӑна сума суса кантата ҫыратӗ... Сасартӑк усал хыпар ҫитет, вӑл ҫемьене чун-чӗререн хускатать, кӳрентерме тытӑнать. Пурте тӗлӗнеҫҫӗ, ҫемье чысӗшӗн кӗрешме тытӑнаҫҫӗ. Пуринчен ытла ватӑ Аллан хытӑ хуйхӑрать, хытӑ тӗлӗнет. Аллан—хурапа шурра нумай курнӑ ҫын. Вӑл совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче кӑна ятлӑ ҫын пулса тӑрать. Аллан чугун ҫул ӗҫне калама ҫук хытӑ юрататъ, вӑл чунне парса тӑрӑшать. Ҫавӑнпа та вӑл ӗҫ ҫине сӳрӗк те йӗркесӗр пӑхакан ҫынпа иневпе те килӗшме пултараймасть. Ватӑ Бике те ывӑлӗн пӑсӑк ӗҫӗ ҫине упӑшки пекех тарӑхса пӑхать. Ҫамрӑк Язгюль пиччӗшӗ ҫинчен ҫырма тытӑннӑ кантатӑн ноттисене тарӑхнипе ҫуркаласа тӑкать. Атапа Курбан та пиччӗш панӑ парнесене (вӗсене Байрам ватӑ Аллан чугун ҫулӗ ҫинче вӑтӑр ҫул ӗҫленӗ ятпа ирттернӗ юбилей чух панӑ пулнӑ) каялла тавӑрса параҫҫӗ. Аллан килӗнче вырӑс хӗрӗ—Зина Соловьева пурӑнать. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче эвакуаци йӗркипе куҫса килнӗскере, ӑна Аллан хӑй патне йышӑннӑ, кайран вара хӑй хӗрӗ вырӑннех шутлама тытӑннӑ. Байрамӑн обществӑна хирӗҫле ӗҫӗ Зинӑна та кӑмӑлсӑрлатать, мӗншӗн тесен Зина Аллан килйышӗнче пурте хисеплекен пӗр тан ҫын. Пӗр ӗмӗтпе, пӗр кӑмӑлпа пурӑнакан патриотсен ҫемйи Байрама тӗрӗс ҫул ҫине кӑларса таса чун-чӗрелле ҫын тӑвассишӗн тӑрӑшать, вӑл ӑна ӗлӗкхи пекех хисеплӗ ҫынсен ретӗнче курасшӑн.

Пьесӑн тӗп теми—патриотла совет ҫемйин пӗрлӗхӗ. Ҫав пӗрлӗхе кӑтартса парасси спектаклӗн тӗп задачисенчен пӗри пулса тӑрать. Аллан Мерданов рольне Чӑваш АССР тава тивӗҫлӗ артисчӗ А. К. Ургалкин вылять. Ургалкин — лайӑх вылякан артист, вӑл спектакль куракансене хӑйӗн ӑсталӑхӗпе, чун-чӗри тарӑнлӑхӗпе хӑйӗн аллине ҫавӑрса илет. Аллан (Ургалкин) таса шухӑш-кӑмӑллӑ, такам та юратмалли ҫын. Сӑмаха вӑл хуть хӑҫан та тӳррӗн калать, тепӗр чух тӗксе-юптарса та илет. Вӑл ҫынна яланах ырӑ тума, пулӑшма тӑрӑшать. Тулли кӑкӑрпа кулса илни те, витӗр куҫсемпе кӑштах хӗсерех пӑхни те Аллан сӑн-сӑпатне илемлетеҫҫӗ. Аллан — ӑслӑ ҫын, нумай курнӑ, нумай тӳснӗ ҫын. Ҫавӑнпа та вӑл ҫирӗп чун-чӗрелле, ҫирӗп характерлӑ. Вӑл хӑйӗн ывӑлне чӑн сӑмах каласа пама, мӗнле йӑнӑш туни ҫинчен каласа пама ҫине тӑрсах хистет. Ывӑлӗн айӑпӗ ӑна хытӑ хускатнӑ, хытӑ шухӑшлаттарнӑ пулин те, хӑйне вӑл ҫирӗппӗн, тататӑклӑн тыткалать, мӗншӗн тесен вӑл чӑн-чӑн совет ҫынни, чӑн-чӑн патриот. Аллан хӑй ҫемйи чысне хӑтарма, ывӑлне тӳрӗ те тӗрӗс ҫул ҫине кӑларма майсем шырать. Ҫемье колхоз тӳснӗ расхода укҫан тавӑрса парать. Ҫакӑн хыҫҫӑн тин ватӑ Аллан чун-чӗри лӑпланать, вӑйӗ хутшӑнать. Ургалкин сӑнласа кӑтартнӑ Аллан сӑнарӗ — Ургалкин артистӑн пысӑк ҫитӗнӗвӗ пулса тӑрать.

Чӑваш АССР тава тивӗҫлӗ артисчӗ
И. О. Молодов Байрам сӑнарне к
кӑтартса пачӗ. Пӗтӗмӗшпе илсен, Ба
япӑх ҫын мар. Унӑн кӑкӑрӗ ҫинче о
семпе медальсем те сахал мар, тытн
вӑл тӗплӗн те хӑвӑрт тӑвать, вӑл
руководитель иккенӗ пур ҫӗрте те
нет. Байрам, колхозниксен массисемп
чӑ ҫыхӑнса, ырми-канми ӗҫлесе, кал
са пыракан колхоза вӑйлӑ та пуян к
туса хунӑ. Анчах та ҫак лайӑх ҫы
начар енӗсем те пур иккен. Вӑл хӑ
сисмест, хӑй те тавҫӑрса илеймес
артель Уставне, Сталинла ҫирӗп
тава пӑсакан ҫын пулса тӑрать.
ла пулин те Байрам хӑйне
айӑплӑ тесе шутламасть, колхоз
лӑхне эпӗ хамшӑн мар, килекен
семшӗн пуснӑ тесе тӳрре тухма тӑр
Аппӑшӗ-амӑшӗ килйышӗ нумайччен ӑ
тарать ӑна, эсӗ айӑплӑ ӗҫ тунӑ, те
лать. Байрам хӑйӗннех перет. М
артист Байрамӑн пӑсӑк шухӑш-кӑ
вӑл тӗрӗс мар ҫул ҫине тӑнине, ха
лӑх лачакине путма тытӑннине пи
ӑста кӑтартса тӑрӑ шыв ҫине кӑл
Байрам хӑйпе хӑй кӗрешет. Чылай
хӑт хушши шухӑшланӑ хыҫҫӑн, вӑ
йӗн йӑнӑшне вӗҫне ҫитиччен
илет. Спектакле куракан ҫак са
пысӑк хаваслӑхпа йышӑнать, м
тесен вӑл Байрамӑн чун-чӗререн к
сӑмахне хытӑ ӗненет. Ҫын тӗрӗс ҫ
не тӑрать. Ҫакӑ савӑнтарать кур
Байрам сӑнарне Молодов артист
пуҫламӑшӗнчен вӗҫне ҫитиччен
мелле те витӗмлӗ кӑтартса пачӗ.

Ҫамрӑк Язгюль рольне Т. Н. Е
артистка вылять. Язгюль — хас
илемлӗ хӗр. Вӑл кашни совет ҫамрӑ
кех телейлӗ, пурнӑҫа, Тӑван ҫӗ
вӗҫӗ-хӗррисӗр юратать. Ҫак т
уншӑн пурте илемлӗ. Тулли те х
пурнӑҫпа пурӑнакан ҫемьере ӳсс
тӗннӗ Язгюль тӑван аппӑшне амӑшн
чӗререн сума сӑвать, аслӑ пиччӗн
Байрамӑн чапӗпе мухтанать, чу
сывӑх Ата тӑванӗпе ҫепӗҫ чӗлхепе
ҫать, Зинӑна хӑйӗн аппӑшӗ пек
лет. Вӑл хӑйӗн рояльне те темле
юратнӑ пек юратать. Язгюль (Е
сцена ҫинче курӑнни кӑмӑла ҫӗкл
кен ӑшӑ ҫил пек туйӑнать. Хитре
ҫать Язгюль, хӑйне хӑй ҫӑмӑллӑ
тать. Анчах та Евсеева артистка
ҫапла кӑтартса, унӑн сӑн-сӑпатн
енчен ҫеҫ ӳкерсе парать. Язгюль
тарӑн шухӑшлама пултаракан х
ха! Ҫакна артистка вӑйлӑ кӑтарт
раймасть. Евсеева вылянӑ тӑрӑх
аппӑшӗ-амӑшӗ килӗнче Байрам пирк
тӑнӑ хуйха-суйха та ҫӑмӑллӑн тӳс
терет. Ытлашши кулянниие те, ы
хуйхӑрнине те кӑтартмасть вӑл.
пьеса тӑрӑх шӑпах тепӗр майлӑ
ла. Язгюль хӑй ҫемйин чысне
ҫӗрте тӗп вырӑнсенчен пӗрне йы
Аристка ҫакна лайӑх ӑнланса
пирки, Язгюль Байрама хисеплес
кантатӑн ноттисене ҫуркаласа тӑк
нӑна та вӑйсӑр кӑтартса пачӗ. У
гюле пур енчен те туллин сӑнл
тартмалла пулнӑ, ҫавӑн чух вӑл
искусствӑн паха образӗ пулса т

Ата рольне Чӑваш АССР тава
артисчӗ Л Ф. Семенов вылять.
Атан ӑс-хакӑлне, унӑн лӑпкӑ хар
аван кӑтартса парать. Ата пысӑ
кӑткӑс ӗҫсем тӑвать. Пӗтӗм чун х
парӑнать вӑл хӑйӗн ӗҫне. Юратат
ӑна. Ата ҫемьере пуриншӗн те
Ҫак енчен артист образа аван кӑ
пулсан, вӑл ӑна тепӗр енчен ӗн
кӑтартса параймарӗ. Ата хӑй
ҫӗршывне пысӑк та ачаш чунпа ю
вӑл ӑна тӗпренех ҫӗнетесшӗн тӑ
Ҫак сценӑна Семенов халсӑр к
парать. Ата Зинӑна хытӑ юратать
тист вӑййинче ҫак вӗри юрату та
сех каймасть. Семеновӑн хӑйӗн
вӗрирех, хастартарах тытса пы
лать.

Курбан рольне А. И. Бубнов
вылять. Курбан математикӑна пит
тать, вӑл ун ҫинчен ҫӗрӗн-кунӗн
лать, тӗпчет, вӗренет. Курбан хӗр
чӗрелле, ҫӑмӑл шӑм-шаклӑ ҫамрӑк
Вӑхӑт-вӑхӑт вӑл култарса та, ш
та илет. Бубнов артист кӑтартс
Курбан—асра юлакан образ.

Чӑваш АССР тава тивӗҫлӗ ар
А. А. Долгова Аллан арӑмӗн—
сӑн-сӑпатне ӑшӑ кӑмӑлпа, хумхант
туйӑмпа сӑнласа пама тӑрӑшать,
та ҫакна калас пулать: артистка
рольне тӗплӗн туса ҫитереймен. М
А. А. Долгова артисткӑн Бике сӑн
тӗмлӗрех, хӗрӳрех туйӑм-сисӗмпе
са парас пулать.

Е. Н. Никитин артист [illegible] С
рольне вырӑн-вырӑн [illegible],
вылять, анчах та пӗтӗмӗшпе илсен
сӑнӗ шупкарах, ҫителӗксӗртерех
тухнӑ Е. С. Степанова артистк
Зина Соловьева сӑнарне лайӑхлатас
тӗмлӗрех кӑтартас тӗлӗшпе нумай
пулать.

Пьесӑн тӗп шухӑшне тарӑн ӑ
илме П. Д. Димитриев художни
декораци хытӑ пулӑшать. Пьесӑна
кансен тумӗ те вырӑнлӑ, килӗшӳлл

«Ҫемье чысӗ» спектакль—чун-
хумхантаракан, кӑмӑла ҫӗклент
спектакль.

Ф. РОМАНО

„Коммунизм ялавӗ“ хаҫатра ҫырнӑ хыҫҫӑн

„Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетесси ҫине ҫиелтен пӑхнине пӗтермелле“

КПСС Куславкка райкомӗн секретарӗ И. Иванов юлташ «Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетесси ҫине ҫиелтен пӑхнине пӗтермелле» ятлӑ статьяра (статья иртнӗ ҫулхи ноябрӗн 19-мӗшӗнче пичетленнӗ) ҫитменлӗхсене тӗрӗс кӑтартса пани ҫинчен пӗлтерчӗ.

Обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтерес шутпа «Путь Ленина», «Родина», Ворошилов ячӗпе тӑракан тата ытти колхозсен руководителӗсене КПСС райкомне чӗнтерсе каласнӑ, обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тата выльӑхсене хӗл каҫарас ӗҫе лайӑхлатасси ҫинчен КПСС райкомӗн пленумӗнче сӳтсе явнӑ.

Тӗрӗслеме янӑ ҫырусем тӑрӑх

«Коммунизм ялавӗ» хаҫат редакцине Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Шуркассинчи Киров ячӗпе тӑракан колхозра ҫуракине хатӗрленме тытӑнманни ҫинчен ҫыру килнӗччӗ.

Ӗҫсынни депутачӗсен Сӗнтӗрвӑрри район Совет исполкомӗн ялхуҫалӑх пайӗ ҫырура асӑннӑ пур фактсем те тӗрӗс пулни, Киров ячӗпе тӑракан колхоза ҫуракине хатӗрлес тӗлӗшпе тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнни ҫинчен пӗлтерчӗ.

Советсен колхозсене вӑйлатма тӑрӑшмалла

Ӗҫсынни депутачӗсен вырӑнти Совечӗсем хӑйсен территорийӗнче культурӑпа политика тата хуҫалӑх строительствине ертсе пымалла. Ҫакӑ вара райсоветсен исполкомӗсемпе ял Совечӗсем колхозсене организаципе хуҫалӑх тӗлӗшӗнчен тӗреклетессишӗн, ялхуҫалӑх артелӗн Уставне ҫирӗппӗн пурнӑҫласа пырассишӗн куллен кун тимлӗн тӑрӑшмаллине пӗлтерет.

Анчах халиччен практикӑра ҫакӑ курӑнать: вырӑнти Советсенчен хӑшпӗрисем ялхуҫалӑх артелӗсене ертсе пырас ӗҫре колхоз правленийӗсем ҫине ытларах шанаҫҫӗ, вӗсем хуҫалӑхри ӗҫсене йӗркелесе пынипе сахал интересленеҫҫӗ, ӗҫри ҫитменлӗхсене вӑхӑтра палӑртма, ҫав ҫитменлӗхсене сиенчех пӗтерме тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнмаҫҫӗ. Ҫавна пула колхозсенче пысӑк йӑнӑшсем тӑваҫҫӗ. Хуҫалӑх ҫулӗ вӗҫленнӗ май колхозсенче ҫулталӑк хушшинче туса илнӗ тупӑшсене пайласа валеҫнӗ чухне ҫак ӗҫпе ӗҫсынни депутачӗсен Совечӗсем те интересленме тивӗҫлӗ. Вырӑнти Советсен колхозсенче тырпула тата укҫа-тенкӗ тупӑшӗсене валеҫес ӗҫе ертсе пырас пулать, ку ӗҫе тӗрӗс тума, ӗҫри ҫитменлӗхсене сиенчех пӗтерме пулӑшмалла.

Колхозсен натуральнӑй тата укҫа-тенкӗ тупӑшӗсене тӗрӗс пайлани тата валеҫни — хуҫалӑха тӗреклетес ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Анчах хӑшпӗр колхозсен руководителӗсем ҫакна шута илмеҫҫӗ, государство умӗнчи обязательствӑсене тултарнӑ хыҫҫӑн, ялхуҫалӑх артелӗн Уставӗ тӑрӑх кӑтартнӑ фондсене ҫителӗклӗ чухлӗ уйӑрмасӑрах, пӗтӗм тупӑша ӗҫкунӗсем тӑрӑх валеҫҫӗҫ.

Хӑшпӗр колхозсен правленийӗсем кашни ӗҫкунӗ пуҫне миҫе килограмм тырӑ панипе ҫеҫ колхоз пуян пулнине кӑтартма хӑтланаҫҫӗ. Вӗсем ҫакӑн ҫинчен манаҫҫӗ: колхоз пуянлӑхне пайланман обществӑллӑ фондсем ӳссе пыни палӑртса тӑрать; ӗҫкунӗсем тӑрӑх илекен тупӑш ӳссе пыни колхоз хуҫалӑхӗ ӳссе пынинчен килет.

1951 ҫулта Комсомольски районӗнчи хӑшпӗр колхозсен руководителӗсем колхозӑн пайланман фончӗсене ӳстерме укҫа-тенке уйӑрмасӑрах, ялхуҫалӑх артелӗн Уставӗнче кӑтартнӑ обществӑллӑ фондсене тырӑ ҫителӗклӗ таран хӑвармасӑрах, пӗтӗм тупӑша ӗҫкунӗсем тӑрӑх валеҫсе пачӗҫ. «Красный маяк» колхозра счетовод пулса ӗҫленӗ Владимиров «тӑрӑшнипе», обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх апачӗн фондне каймалли 300 центнӗр яхӑн тырра уйӑрса хӑварман, колхозниксене кашни ӗҫкунӗ пуҫне 2,5 килограмм тырӑ салатса панӑ. Ҫавӑн пекех Берия ячӗпе тата Ульянов ячӗпе тӑракан колхозсенче те выльӑх апачӗсене ҫителӗклӗ уйӑрман. Асӑннӑ колхозсен руководителӗсем ку ӗҫре йӑнӑш тунипе выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана тултараймарӗҫ, вӗсен тухӑҫлӑхне ӳстереймерӗҫ, государство умӗнчи обязательствӑсене пурнӑҫлас ӗҫре юлса пычӗҫ. Асанкассинче Ульянов ячӗпе тӑракан колхоз паянхи куна та обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана пӗр йышши выльӑх енӗпе те тултарайман.

Урмаелӗнчи «Алга» колхоз руководителӗсем МТС ӗҫлесе панӑшӑн натуроплата тӳлесе тӑмасӑр, обществӑллӑ фондсене кирлӗ таран хывса хӑвармасӑр колхозниксене кашни ӗҫкунӗ пуҫне виҫшер килограмм тырӑ валеҫсе панӑ. Кӑтартнӑ йӑнӑшсем акӑ мӗншӗн пулнӑ: колхозри руководительсем тупӑша валеҫес ӗҫе мӗнле туса пынипе ӗҫсынни депутачӗсен Совечӗсем кирлӗ таран интересленмен, вӗсен ӗҫӗнчи йӗркесӗрлӗхсене пӗтерме тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнман.

Колхозсенчи ҫак ҫитменлӗхсемпе йӑнӑшсемшӗн, паллах ӗнтӗ, колхоз правленийӗсем ответлӑ. Ҫавӑнпа пӗрлех колхозсенчи ҫавӑн пек тӗрӗс мар ӗҫсемшӗн ӗҫсынни депутачӗсен Совечӗсем те ответлӑ пулса тӑраҫҫӗ. Вӗсем колхозсенче тупӑшсене валеҫес ӗҫ мӗнле пынипе ытларах интересленме, тупӑшсене валеҫес ӗҫе тӗрӗс йӗркелеме пулӑшма тивӗҫлӗ.

Колхозӑн пайланман фончӗ тата ытти обществӑллӑ фончӗсем пӗчӗк пулни колхоза малалла аталантарас ӗҫе чарса тӑрать. Пайланман фонд пӗчӗк пулнӑ пирки колхоз хӑйне кирлӗ ҫурт-йӗрсене туса лартаймасть, пысӑк тухӑҫлӑ ӑратлӑ выльӑхсем туянаймасть, тырпул, курӑк, тымарҫимӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме минераллӑ удобренисем туянаймасть, тупӑш паракан ҫӗнӗ отраслӗсене аталантараймасть; ҫӗнӗрен ҫурт-йӗр тӑвас, ӑратлӑ выльӑх туянас пулсан, ҫав ӗҫсене хӑйӗн укҫипе мар, государствӑран кивҫен илнипе тӑвать. Колхозӑн пайланман фончӗ пӗчӗк пулсан, вӑл тырпул тухӑҫлӑхне кирлӗ пек ӳстерейместь, государство умӗнчи обязательствӑсене те вӑхӑтра тултараймасть е парӑма кӗрет.

Ӗҫсынни депутачӗсен Совечӗсен колхозсенче тупӑшсене пайлас ӗҫре Совет правительстви кӑтартӑвӗсене тӗрӗс пурнӑҫа кӗртес ӗҫе организацилесе, ҫак ӗҫе ертсе пырас пулать.

Совет правительстви юлашки ҫулсенче колхозсем хуҫалӑх тӗлӗшӗнчен чылай аталаннине тата ҫитес вӑхӑтсенче тумалли пысӑк ӗҫсене шута илсе, пайланман фондсем пирки ялхуҫалӑх артелӗн Уставӗнчи 12-мӗш статьяра кӑтартса панисене улӑштарчӗ, 1952 ҫултан пуҫласа ку фондсене ҫулталӑкри укҫа-тенкӗ тупӑшӗнчен 15 процентран кая мар, анчах 20 процентран ытла мар уйӑрса хумалли йӗрке турӗ.

Хӑшпӗр колхозсенче выльӑх-чӗрлӗхрен илекен тупӑш енӗпе пухӑнакан укҫа-тенке колхоз правленийӗн председателӗпе счетоводӗ, ку ыйтӑва колхозниксен пухӑвӗнче тӗплӗн сӳтсе явмасӑрах, ӑҫта кирлӗ унта расходласа пӗтереҫҫӗ. Кун пек йӗркесӗрлӗхе пӗтермелле. Колхозӑн мӗнле те пулин выльӑх ӗрчетмелли планӗ тулсан, выльӑхран илекен тупӑшри укҫан пӗр пайне пайланман фонда хывмалла, ҫав укҫапа выльӑх-чӗрлӗх йышне тата тухӑҫлӑхне ӳстерме усӑ курмалла; юлашки укҫине ялхуҫалӑх артелӗн Уставӗн 12-мӗш статьинче кӑтартнӑ йӗркепе расходлас пулать.

Лашасем ӗрчетмелли план тулмасӑрах лаша выльӑхсем сутнинчен кӗнӗ укҫана пӗтӗмпех пайланман фонда хывмалла, унпа лаша ӗрчетмелли плана тултарма усӑ курмалла. Лашасем ӗрчетмелли план тулнӑ пулсан, анчах ытти енӗпе выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли план тулман пулсан, лашасем сутнинчен килнӗ тупӑшӑн 50 процентне ҫеҫ колхозниксене ӗҫкунӗсем тӑрӑх валеҫсе памалла, ытти 50 проценчӗпе ялхуҫалӑх артель Уставӗн 12-мӗш статьинче кӑтартнӑ йӗркепе усӑ курмалла.

Колхозсен тупӑшне тӗрӗс валеҫесси вӑл — политикӑллӑ пысӑк ӗҫ. Ку ӗҫе кирлӗ пек йӗркелени колхозсене организаципе хуҫалӑх енчен тӗреклетме нумай пулӑшать.

П. ОСИПОВ,
Комсомольски райсовет исполкомӗн председателӗ.

Гидростанци ӗҫлеме пуҫларӗ

ТӐВАЙ. Сталин ячӗпе, Маленков ячӗпе тӑракан, «Новый путь» ялхуҫалӑх артелӗсен членӗсем Кӗтне юханшывӗ ҫинче гидроэлектростанци тума йышӑннӑччӗ. Колхоз членӗсем хӑйсен ӗмӗтне пурнӑҫларӗҫ. Гидроэлектростанцие ҫӗнӗ ҫул тӗлне туса пӗтерчӗҫ. Электростанци ҫак кунсенче колхозниксен килӗсене, культурӑпа сутӗҫ учрежденийӗсене ҫутӑ тытӑнчӗ. Халӗ ҫак колхозсенче лампочкисем ҫутатаҫҫӗ.

Колхоз правленийӗсем электри вӑйӗпе тӗрлӗ ӗҫсенче усӑ курма ха неҫҫӗ.

А. НИКОЛА

И. В. Сталин юлташăн „ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем“ ятлă произведенине тата КПСС XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене вĕренеççĕ

СОФИЯ, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарири хуласемпе ялсенче Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене вĕренесси анлă сарăлнă. Ĕççыннисем И. В. Сталин юлташ съездра тухса каланă сăмаха тата унăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă произведенине пысăк интересленсе вĕренеççĕ.

Предприятисемпе çĕнĕ стройкăсенче, учрежденисемпе кооперативла çĕрĕç хуçалăхĕсенче нумай сынлă пухусем пулса иртеççĕ, съезд материалĕсене тата Сталин юлташăн генилле произведенине вĕренме кружок занятийĕсем пулаççĕ, семинарсем ирттереççĕ.

СОФИЯ ХУЛИНЧИ ĔÇÇЫННИСЕН ПУХĂВĔ

СОФИЯ, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер София хулинче Червенков районĕнчи ĕççыннисен нумай çынлă пухăвĕ пулса иртнĕ. Ăна халăхсен мире хӳтĕлес тĕлĕшпе Вена хулинче пулса иртнĕ Конгресĕн ĕçĕсен итогĕсене сӳтсе явас тĕлĕшпе йыттернĕ.

Пухура Болгарири мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Наци комитечĕн председателĕ, халăхсен мире хӳтĕлес тĕлĕшпе Вена хулинче пулса иртнĕ Конгресне хутшăннă Болгари делегацийĕн руководителĕ Георгий Наджаков академик сăмах тухса каланă.

Болгарире агротехникăна вĕренеççĕ

СОФИЯ, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарири ялсенчи ĕççыннисем агротехникăна йышлăн вĕренеççĕ. Кăçал хĕлле агротехника тата зоотехника кружокĕсем 4 пин ытла организациленĕ. Унта бригадирсем, звеньевойсем тата чи лайăх производственниксем, пурĕ 90 пин çын вĕренеççĕ.

Висĕ çуллăх курссем 140 тунă. Унта ялхуçалăхĕнче малта пыракансем производствăран уйрăлмасăр вĕренеççĕ. Болгарипе Совет Союзĕ хушшинчи обществăсен Союзĕ пулăшнипе, Совет Союзĕнчи социализмлă çĕрĕçĕн ăстисене вĕрентмелли курссен вĕренӳ программисене болгарла куçарнă, вăл программăсене вырăнти условисенче усă курма юрăхлă тунă.

ССР Союзĕнчи тата халăх демократи çĕршывĕсенчи ялхуçалăх наукисен аслă учрежденийĕсен представителĕсен конференцийĕ уçăлнă

ПРАГА, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакири телеграф агентстви çапла пĕлтерет: паян Прага хулинче Совет Союзĕнчи тата халăх демократи çĕршывĕсенчи ялхуçалăх наукисен аслă учрежденийĕсен представителĕсен конференцийĕ уçăлнă. Конференци ĕçне Совет Союзĕнчи ялхуçалăхĕ енĕпе ĕçлекен наука работникĕсен делегацийĕ хутшăнать. Делегацие В. И. Ленин ячĕпе тăракан Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх наукисен академийĕн вице-президенчĕ М. А. Ольшанский ертсе пырать. Конференци ĕçне çавăн пекех Польша, Румыни, Венгри тата Демократиллĕ Германи Республикин делегацийĕсем хутшăнаççĕ.

Конференцие Чехословаки делегацийĕн руководителĕ, Чехословаки республикинчи Ялхуçалăх наукисен академийĕн президенчĕ А. Клечка уçнă. Вăл конференци задачисем çинчен чарăнса тăрса çакна палăртнă: конференци ялхуçалăх наукинчи питĕ паллă ыйтусене тата мир лагерĕнчи наука учрежденийĕсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлемелли майсене сӳтсе явĕ. Конференци Совет Союзĕнче ялхуçалăх науки тунă çитĕнӳсемпе халăх демократи çĕршывĕсенче тата лайăхрах усă курма пулăшмалла, тенĕ А. Клечка.

Ун хыççăн Клечка конференци ĕçĕн программине паллаштарнă. Конференцире тăватă секци, тырпул акса тăвас, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе тата механизаципе экономика енĕпе секцисем ĕçлемелле. Конференцири секцисем хăйсен умĕнче тăракан задачăсене Совет Союзĕнчи тата халăх демократи çĕршывĕсенчи ялхуçалăх наукисем тунă паллă çитĕнӳсемпе усă курас тĕллевпе сӳтсе яваççĕ.

Конференцин пĕрремĕш ларăвĕнче президиум суйланă тата делегатсене секцисем тăрăх уйăрнă. Конференци висĕ кун хушши ĕçлет.

КИТАЙРИ СТРОИТЕЛЬСТВО

ШАНХАЙ, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Китайри хуласенче строительство площадкисенче ĕç вăйланса пырать. Капитальнăй строительство ытларах та ытларах сарăлать.

Хаçатсенче çĕршыври нумай районсенче строительство пуçланни çинчен, промышленность строительствине пурнăçлама çĕнĕ пайсемпе комитетсем туни çинчен пĕлтереççĕ.

Паян «Лаодунбао» хаçат Шанхайри Машинăсем тăвакан «Цзюцзян» заводра çĕнĕ цех ĕçлеме пуçлани çинчен пĕлтернĕ. Çĕнĕ цех ĕçлеме пуçланă хыççăн завод 1953 çулта 1952 çулхинчен висĕ хут ытларах станоксем туса кăларать. Çĕршыва ирĕке кăлариччен ку завод ялхуçалăхĕнче ĕçлемелли пысăк мар машинăсем кăна тунă, халĕ вăл шлифовальнăй тата расточнăй станоксем туса кăларать. Çав станоксем промышленность строительстви валли кирлĕ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче Корея Халăх çарĕн тата Китай халăх добровольцĕсен соединенийĕсем мĕнпур фронтсенче Америкăпа Англи интервенчĕсен тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçнă.

Зенитнăй чаçсем тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 3 самолетне персе ӳкернĕ, 2 самолетне сиенленĕ. Çав самолетсем мирлĕ халăх пурăнакан хуласемпе ялсем çине тискеррĕн бомбăсем пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ çĕре хутшăннă пулнă.

ПХЕНЬЯН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем тата Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсем Коранпхори районĕнче Америкăпа Англи интервенчĕсене хирĕç çапăçнă.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтакĕсем паян тăшманăн 5 самолетне персе ӳкернĕ, 2 самолетне сиенленĕ. Вăл самолетсем мирлĕ халăх пурăнакан районсем çине тискеррĕн бомбăсем пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ çĕре хутшăннă пулнă.

Бельгипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществин ĕçĕсем

БРЮССЕЛЬ, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Брюссель хулинче Бельгипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх Обществин Наци комитечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Унта вырăнти организацисен представителĕсем те хутшăннă.

Общество председателĕ Фернан Жакмотт Общество иртнĕ çулта туса ирттернĕ ĕçсем çинчен доклад тунă. Вăл Бельгири халăх Совет Союзĕнчи халăхсен пурнăçĕпе, Совет Союзĕ питĕ пысăк мирлĕ строительство туса пынипе хытăрах та хытăрах интересленни çинчен каласа панă.

Иртнĕ çулта çĕршыври хуласемпе ялсенче Совет Союзĕнчи халăхсен пурнăçĕ çинчен 900 ытла тĕрлĕ пухусем ирттернĕ, 300 ытла лекцисемпе докладсем туса панă, 60 ытла фотовыставка организациленĕ. Çак фотовыставкăсене Совет Союзĕнчи культурăпа йăла, наукăпа искусство ĕçĕсене, Совет Союзĕ мире тĕреклетессишĕн пыракан кĕрешӳре пысăк вырăн йышăнса тăнине кăтартса парас шутпа тунă.

Ĕççыннисем коммунизмăн аслă стройкисем çинчен, питĕ пысăк каналсемпе гидростанцисен строительствисем çинчен, çутçанталăка улăштарса çĕнетесси çинчен, Совет Союзĕнчи шахтерсемпе колхозниксен, интеллигенцин пурнăçĕ çинчен, çавăн пекех Совет Союзĕнчи литературăпа искусство, музыкăпа кино çинчен тунă выставкăсемпе тата лекцисемпе хытă интересленнĕ. Мичуринецсен секцийĕ интереслĕ ĕç туса пынă.

Октябрь революцийĕ 35 çул тултарнă ятпа Бельгипе Совет Союзĕ хушшинче туслăх уйăхлăхне ирттернĕ вăхăтра ĕçре пысăк çитĕнӳ тунă. Çулталăк хушшинче çĕршывра вырăнти обществăсем çĕнĕрен 35 организациленĕ.

Комитет ларăвĕнче Брюссель, Льеж, Вервье тата ытти хуласенчи вырăнти организацисен представителĕсем сăмах тухса каланă. Вĕсем хăйсен ĕçĕ çинчен каласа панă.

ВЕНГРИ ХАЛĂХĔ ХАЛĂХСЕН МИРЕ ХӲТĔЛЕС ТĔЛĔШПЕ ВЕНА ХУЛИНЧЕ ПУЛСА ИРТНĔ КОНГРЕСĔН РЕШЕНИЙĔСЕНЕ ЫРЛАТЬ

БУДАПЕШТ, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Венгрире ĕççыннисен нумай çынлă пухăвĕсем пулса иртеççĕ. Вăл пухусенче халăхсен мире хӳтĕлес тĕлĕшпе Вена хулинче пулса иртнĕ Конгресĕн решенийĕсем çинчен сӳтсе яваççĕ. Юлашки кунсем хушшинче çавăн пек пухусем шахтерсен центрĕнче — Татабань хулинче, Залаэгерсег, Цеглед, Секешфехервар тата ытти хуласенче те пулса иртнĕ. Пуху участникĕсем халăхсен мира хӳтĕлес тĕлĕшпе Вена хулинче пулса иртнĕ Конгресĕн решенийĕсене пĕр кăмăллă пулса ырлаççĕ, вăл решенисене пурнăçа кĕртессишĕн таттăклăн кĕрешме хатĕррине палăртаççĕ.

Миршĕн кĕрешекенсен комитечĕн ларăвĕ

БЕРЛИН, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Берлинра миршĕн кĕрешекенсен нимĕç комитечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ.

Комитет председателĕ В. Фридрих профессор халăхсен мире хӳтĕлес тĕлĕшпе Вена хулинче пулса иртнĕ Конгресĕн решенийĕсем çинчен доклад туса панă.

Ун хыççăн миршĕн кĕрешекенсен нимĕç комитечĕн генеральнăй секретарĕ Г. Вильман тухса каланă. Вăл халăхсен мире хӳтĕлес тĕлĕшпе Вена хулинче пулса иртнĕ Конгресĕн решенийĕсене халăхăн анлă сийĕсем хушшинче пропагандăлама кирлине палăртнă.

Ларура миршĕн кĕрешекенсен нимĕç комитетĕнчен миршĕн кĕрешекенсен нимĕç совечĕ тăвасси çинчен решени йышăннă, совет президиумне суйланă. Совет президиумĕ составне çаксем кĕнĕ: В. Фридрих профессор, И. Бехер поэт, Халăх палатин депутачĕ Ф. Далем, Демократиллĕ Германи Республикин Халăх палатин председателĕн заместителĕ Э. Гольденбаум, Берлинри Гумбольт ячĕпе тăракан университетăн ректорĕ В. Нейе, Демократиллĕ Германи Республикин премьер-министр заместителĕ О. Нушке, Анна Зегерс писательница тата ыттисем те.

Суд Жак Дюкло жалобине тивĕçтернĕ

ПАРИЖ, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). 1952 çулхи июль уйăхĕнче «Фигаро» хаçат Франциири Коммунистсен партийĕн секретарĕн Жак Дюклон çырусем çырмалли кĕнекинчи уйрăм вырăнсенчи сăмахсене пичетлесе кăларнă. Вăл кĕнекене Жак Дюклона майăн 28-мĕшĕнче арестленĕ чухне вăрланă пулнă. «Фигаро» хаçат Дюкло çырса пынисене пăсса кăтартса пичетленĕ, Дюкло çырнă сăмахсене элеклĕ сăмахсемпе çыхăнтарнă. Жак Дюкло «Фигаро» хаçат редакцийĕнчен унăн çырăвне пичетлесе кăларма требовани лартнă. Хаçат шухăшласа кăларнă суя сăмахсене Жак Дюкло тăрă шыв çине кăларнă.

«Фигаро» хаçат çырăва пичетлесе кăларма килĕшменнине пула, Дюкло суда жалоба панă.

Ĕнер 17-мĕш участокри суд решени йышăннă. Вăл решени тăрăх «Фигаро» хаçат директорне Пьер Бриссона 6.000 франк чухлĕ штраф тӳлеттермелле тунă, çавăн пекех ăна 8 кун хушшинче Жак Дюкло çырăвĕн текстне пĕтĕмĕшпех пичетлесе кăларма хушнă. Вăл çырăва Дюкло çырса пынă сăмахсем тесе суйса пичетленĕ материал вырăнĕнчех пичетлеме хушнă.

Хĕвеланăç Германири хресченсем начар пурăнаççĕ

БЕРЛИН, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Бонри милитаристсемпе реваншистсем Хĕвеланăç Германие тепĕр хут хĕçпăшаллантараççĕ тата вăрçа хатĕрленеççĕ. Çавна пула Хĕвеланăç Германири хресченсен анлă массисем пысăк йывăрлăхсемпе асапсем тӳсеççĕ.

Хĕвеланăç Германири «Дейче Штимме» хаçат пĕлтернинчен çакă курăнать: 1948 çултан пуçласа 1951 çулччен Хĕвеланăç Германири ялхуçалăхĕн парăмĕ 2.480 миллион маркăран 4.270 миллион марка таран, урăхла каласан 72 процент ӳснĕ. Хресченсен парăмĕсем, тесе çырать çак хаçат, Хĕвеланăç Германири ялхуçалăхĕн парăмĕн пĕтĕм хисепĕн 37,5 процентне чухлĕ пулаççĕ.

Хĕвеланăç Германири вак хресченсен пурнăçĕ уйрăммăнах начар. Хĕвеланăç Германире çулсерен тухса тăракан статистика журналĕнче 1952 çулта пичетленнĕ официальнăй сведенисем тăрăх, 0,5 гектар çĕр тытса тăракан хресчен хуçалăхĕсем Хĕвеланăç Германире 1.124.237 шутланаççĕ. Ку хуçалăхсем Хĕвеланăç Германири çĕр тытса тăракан çынсен мĕнпур хисепĕн 55 процентне чухлĕ пулаççĕ, анчах вĕсем пĕтĕм çĕр лаптăкĕн 10,9 процентĕпе кăна усă кураççĕ.

Çав вăхăтрах Хĕвеланăç Германире нумай çĕр тытса тăракансем 14.414 çын шутланаççĕ. Вĕсем кашниех 100-шер гектар ытла çĕрпе усă кураççĕ. Çак çынсем çĕр тытса тăракан çынсен пĕтĕм хисепĕн 0,7 процентне чухлĕ кăна шутланаççĕ. Апла пулин те хăйсен аллинче Хĕвеланăç Германире усă куракан пĕтĕм çĕр лаптăкĕн 27,7 процентне чухлĕ çĕр тытса тăраççĕ.

Хĕвеланăç Германире вак хресчен хуçалăхĕсенче 4.760.258 çын шутланать. Çемье членĕсене те илсе шутласан, кашни çын пуçне 0,5 гектар чухлĕ çĕр тивет. Çав çĕрĕн 30 процентне хресченсем вăхăтлăха усă курма тара илеççĕ. Çав вăхăтрах нумай çĕр тытса тăракан çынсен çемйинче кашни çын пуçне 530 гектар ытла çĕр тивет. Хĕвеланăç Германире нумай çĕр тытса тăракан çынсем шутне чи малтан Гитлер генералĕсем пулнă çынсем, Бонн правительстви вăрçа хатĕрленнĕ çĕре активлă хутшăнакансем, кĕреççĕ.

Эссен хулинче тухса тăракан «Нейе фольксцейтунг» хаçат нумаях пулмасть çапла пĕлтернĕ: Хĕвеланăçри державăсем вăрçа хатĕрленнĕ май, хĕвеланăçри оккупаци çарĕсем Хĕвеланăç Германире 500 пин гектар акмалли çĕре конфискациленĕ. Хĕвеланăç Германири 70.000 хресчене вăл çĕрсем çинчен хăваласа янă.

И. В. Сталин юлташ КПСС XIX-мĕш съездĕнче каланă сăмаха Данире уйрăм кĕнеке туса пичетлесе кăларнă

КОПЕНГАГЕН, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Халăх ыйтнине шута илсе, Данири Коммунистсен партийĕн «Тиден» издательстви И. В. Сталин юлташ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕнче каланă сăмаха уйрăм кĕнеке туса, иккĕмĕш хут пичетлесе кăларнă. Кĕнекене пысăк тиражпа пичетлесе кăларнă.

ИТАЛИРИ ЖЕЛЕЗНОДОРОЖНИКСЕН ЗАБАСТОВКИ

ПАРИЖ, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви Римран çапла пĕлтерет: январĕн 12-мĕшĕнче, çĕрле 12 сехетре, железнодорожниксен забастовки пуçланнă. Италири мĕнпур чугун çулсем тăрăх поездсем çӳреме чарăннă. Забастовка пуçланнă самантра çул çинче пулнă поездсем çывăхри чугун çул пункчĕсене çитсе чарăннă. Расписани тăрăх, çĕрле, 11 сехет хыççăн каймалли поездсем çул çине тухман. Çурçĕр вăхăтĕнче мĕнпур кассăсене хупнă.

Забастовка железнодорожниксен профсоюзĕ чĕннипе пуçланнă.

СУЭЦ КАНАЛĔ ТĂРĂХĔНЧИ САЛТАКСЕН ПĂЛХАНĂВĔСЕМ

БЕЙРУТ, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Египет хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Суэц каналĕ тăрăхĕнче Англи салтакĕсем хушшинче халĕ те пăлханусем пулса иртеççĕ. Салтаксем хăйсене киле яма требовани лартаççĕ.

«Роза эль-Юсеф» журнал çапла пĕлтерет: çĕнĕ çул уявĕ вăхăтĕнче салтаксене панă кучченеçсемпе пĕрле листовкăсем салатнă пулнă. Вăл листовкăсем салтаксене тăван çĕршыва яма, Корейăри вăрçа чарса лартма, вăрçă политикине хирĕç тăма, аслă державăсем хушшинче пĕрнепĕри ăнланассине йĕркелеме требовани лартма чĕннĕ.

Çар полицийĕ çак ĕçе тĕпчесе пĕлме тытăннă.

Англин Суэц каналĕ тăрăхĕнче вырнаçнă çар лагерĕсенче, сăмахран, Файидра, Исмаилире, Тель-эль-Кебире тата Суэцра вырнаçнă лагерьсенче чрезвычайнăй лару-тăру тата касхине 5 сехетрен пуçласа ирхине 6 сехетчен комендант сехечĕ туса хунă.

Египетри «Аль-Ахбар» хаçат çапла пĕлтерет: Англин Фаиды районĕнчи çар влаçĕсем Маврикия утравĕ çинчен пынă 350 салтака арестленĕ, вĕсене хĕçпăшалсăрлантарса Кăнтăр Африкăна ăсатнă. Унта вĕсене пăлхава хутшăннăшăн суд тăваççĕ.

БРАЗИЛИРИ ЗАБАСТОВКĂСЕМ

МОНТЕВИДЕО, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). «Импренса популар» хаçат çапла пĕлтерет: Рио-де-Жанейро хулинчи пир-авăр промышленноçĕнчи 30 пин рабочин забастовки малалла пырать. Çавăн пекех Бруске хулинчи (Санта-Катарина штачĕ) пир-авăр промышленноçĕнчи 4.200 рабочи тата Сан-Пауло хулинчи ипподромри 1.000 рабочи забастовка тăваççĕ. Забастовка тăвакансем ĕç укçи ӳстерме требовани лартаççĕ.

Рио-де-Жанейро, Санто-Антонио тата Крузейро хулисенчи нумай фабрикăсенчи рабочисем, пир-авăр промышленноçĕнчи рабочисен забастовкипе тата вĕсен требованийĕсемпе пĕр шухăш-кăмăллă пулнине палăртса, забастовка пуçланă. Ку хуласенче пурăнакансем забастовка тăвакансене укçа парса пулăшаççĕ.

АМЕРИКАНЕЦСЕМ ЯПОНИ ХАЛĂХĔНЧЕН МĂШКĂЛЛАÇÇĔ

ПЕКИН, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви çапла пĕлтерет: японецсем Фудзияма сăртне таса вырăн тесе шутлаççĕ; американецсем çав сăрт тăррине пысăк çар радиостанцийĕ, сăрт çумĕнче аэродром тата 30.000 çын вырнаçмалăх казармăсем тунă. Америка казармисем тавра аскăн çурчĕсем тата ытти çавăн пек заведенисем уçнă.

Çав сăрт районĕнче пурăнакан халăх кăй таса вырăн тесе шутлакан вырăнтан кулнăшăн питĕ хытă тарăхать.

БОЛИВИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Ла-Пасран пĕлтернĕ тăрăх, Боливи правительстви 13 çынна арестлесси çинчен пĕлтернĕ. Вĕсене нумаях пулмасть Пас Эстенсоро правительствине хирĕç тунă кавара хутшăннăшăн айăплаççĕ.

Арестленĕ çынсем хушшинче правительствăна хирĕç пыракан ушкăнсен лидерĕсем Роберто Арсе тата Хаиме Саморано пур. Вĕсем иртнĕ вăхăтра Америка хушнă тăрăх ĕçленĕ Бальвинанăн çар ушкăнĕпе çыхăнса ĕçленĕ пулнă. Çавăн пекех нациллĕ экономикăн министрĕн заместительне Альфредо Кандиана арестленĕ.

ФРАНЦИН НАЦИ ПУХĂВĔНЧЕ

ПАРИЖ, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Наци пухăвĕн çĕрлехи ларăвĕнче виççĕмĕш хут сасăланă хыççăн, Эррио 223 сасă, Фуркад — 143 сасă, Кашен — 56 сасă пухнă. Çапла вара Эрриона каллех Наци пухăвĕн председателĕ пулма суйланă.

Çут пăрлă каток çинче конькипе ярăнасси—çамрăксен юратнă спорчĕ. Хĕллехи каникул вăхăтĕнче Шупашкарти катоксем çинче çамрăксем уйрăмах нумай пулчĕç.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: «Молния» спорт обществин катокĕ çинче çамрăксем конькипе ярăнаççĕ.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Республикăри шахмат чемпионачĕ вĕçленнĕ

Шахматла выляса республика чемпионĕ ятне илес тĕлĕшпе ирттернĕ турнир вĕçленчĕ. Никитин (Шупашкар) 15-рен 13,5 очко илнĕ, П. Федоров (Çĕмĕрле)—12,5, Сергиевский (Шупашкар)—10,5, Смирнов (Шупашкар)—10, Яснопольский (Шупашкар)—9,5, Сиротин (Шупашкар)—8,5, Гуляев (Горький), Соловьев (Шупашкар) тата В. Федоров (Хĕрлĕ Чутай)—7,5-шер, Егоров (Чкаловски)—6, Андреев (Канаш), Романов (Çĕрпӳ) тата Яковлев (Шăхасан)—5-шер, Дерягин (Комсомольски) тата Кочетков (Çĕмĕрле)—4,5-шер, Николаев (Вăрнар)—3 очко илнĕ.

Чемпионат итогĕсене пăхса тухнă хыççăн, республикăри шахмат секцийĕ çакăн пек решени йышăннă: Никитин совет спортсменĕн хисеплĕ ятне вараланăшăн, хăйне хулиганла тытнăшăн Республикăри физкультурăпа спорт комитетĕнчен ăна (Никитина) малашне икĕ çул хушши шахмат ăмăртăвĕсене хутшăнма чарма ыйтас. Çавна май 1953 çулта республика чемпионĕн ятне никама та парас мар. Чемпиона тамалли парнене П. Федорова (Çĕмĕрле) парас. Шахмат секцийĕ çавăн пекех Андреева (Канаш) турнир ирттерекен пӳлĕме ӳсĕр пынăшăн выговор памалла тунă.

Иккĕмĕш разрядри шахматист Яснопольский (Шупашкар) турнирта пĕрремĕш разрядри шахматист ятне илмелли нормăна тултарнă. Çавна май ăна пĕрремĕш разрядри шахматист ятне памалла тунă.

Пĕр ялти студентсем

Революцичченхи вăхăтра Мăн Чураш ялĕнче хутла пĕлекенсем питĕ сахал пулнă. Телейлĕ те савăнăçлă пурнăçпа пурăнаççĕ халĕ колхозлă ял ĕçченĕсем. Мăн Чурашра ял интеллигенцийĕ ӳссе çитĕнчĕ.

Ялти вăтам шкулта 400 ача ялăн вĕренет. Кунти шкултан вĕренсе тухнă чылай çамрăксем çĕршыври аслă шкулсемпе техникумсенче вĕренеççĕ.

Чăваш педагогика институтĕнче çак ялтан 10 çамрăк вĕренет. Иртнĕ çул учительски институтран висĕ çын вĕренсе тухса тăван района ĕçлеме таврăнчĕç.

«Прогресс» колхоз членĕн Е. Дмитриевăн аслă хĕрĕ Катя педагогика институтĕнчен вĕренсе тухрĕ, кĕçĕн хĕрĕ Лиза Горькири медицина институтĕнче вĕренет.

И. СЕРГЕЕВ.

Советски районĕ.

Пĕлтерни

Январĕн 16-мĕшĕнче, 19 сехетре, Советсен Çуртĕнче (ларусем ирттерекен Пысăк залра) хулари агитаторсен пĕрлехи пухăвĕ пулать. Кун йĕркинчи ыйту: «Агитаторсен ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен суйлавне хатĕрленнĕ тата ирттернĕ вăхăтри задачисем».

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ

Паян, январĕн 16-мĕшĕнче, вырăсла спектакль «ЗЕМНОЙ РАЙ»

Ыран, январĕн 17-мĕшĕнче, чăвашла спектакль «ПАРНЕЛЛЕ ТУЙ»

Спектакльсем 20 сехетре пуçланаççĕ.

Шупашкарти тата республикăри экрансем çинче

„САДКО“

ятлă илемлĕ çĕнĕ фильм кăтартма пуçлаççĕ.

Фильм сценарине, Онега таврашĕнчи былинăсем тăрăх, Сталинла премин лауреачĕ К. Исаев çырнă.

Фильма лартаканĕ—РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ, Сталинла премин лауреачĕ Александр ПТУШКО.

Музыки — Н. РИМСКИЙ-КОРСАКОВАН.

Музыка редакторĕ тата хушса çыраканĕ—РСФСР халăх артисчĕ, Сталинла премин лауреачĕ В. ШЕБАЛИН.

Ташăсене йĕркеленĕ—РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ, Сталинла премин лауреачĕ С. КОРЕНЬ.

Рольсене выляна:

С. Столяров, М. Трояновский, И. Переверзев, Н. Крючков, С. Мартинсон, М. Астангов, О. Викланд т. ыт.

Ленин орденлĕ «Мосфильм» киностуди ӳкерне, 1952 ç.

Экрансем çине «Главкинопрокат» кăларать.

1953 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче Мускав хулинче

Государствăн 3 процентлă выляса илмелли шалти заемĕн 30-мĕш вылявĕ пулать

Вылявра заемăн 4 разрядĕнчи облигацисем çине çавăн чухлĕ выигрышсем тухаççĕ:

Выигрыш пысăкăшĕ (тенкĕпе	Тĕп вылявра	Хушса ирттерекен вылявра
100 000	—	4
50 000	8	20
25 000	20	100
10 000	100	320
5 000	320	3 200
1 000	2 800	9 200
400	30 752	33 156
Мĕнпур выигрышсем	34 000	46 000
Выигрышсен пĕтĕм сумми (тенкĕпе)	18 600 800	45 562 400

Çак заем тăрăх кашни çулах ултă тĕп выляв—январĕн 30-мĕшĕнче, мартăн 30-мĕшĕнче, майăн 30-мĕшĕнче, июлĕн 30-мĕшĕнче, сентябрĕн 30-мĕшĕнче, ноябрĕн 30-мĕшĕнче пулать, кунсăр пуçне, хушса ирттерекен выляв сентябрĕн 30-мĕшĕнче пулать.

Тĕп вылявра тухнă выигрышсене облигацисене кирек хăçан туяннă пулсан та тӳлеççĕ. Хушса ирттерекен вылявра тухнă выигрышсене облигацисене выляв пуличчен 9 уйăх ытла малтан илнĕ пулсан тӳлеççĕ.

Перекет кассисем заем облигацийĕсене ирĕклĕн сутаççĕ тата илеççĕ.

Государствăн 3 процентлă выляса илмелли шалти заемĕн облигацийĕсене туянăр!

Государство заемĕсем СССР халăх хуçалăхне малалла вăйлатса пыма пулăшаççĕ.

ЧĂВАШ АССР ПЕРЕКЕТ КАССИСЕМПЕ ГОСУДАРСТВО КРЕДИЧĔН УПРАВЛЕНИЙĔ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретарнат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ 7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00921. Типография №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.